ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

# КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрь 1 ытларикун № 234 (9143)

Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.


**Паянхи номерте:**


Тăван çĕршывра (1 стр.).
Хамăр республикăра (1 стр.).
Г. М. Маленков Великобритани Посолне Сэр Уильям Хэйтера йышăнни (1 стр.).
М. Буркова.—Пропагандистсене пулăшасси—парти библиотекисен хисеплĕ задачи (2 стр.).
Г. Луч, В. Веселов.—Комсомол кадрĕсене куллен вĕрентмелле (2 стр.).
ВЫРАНТИ СОВЕТСЕНЧЕ. Н. Колесов.—Малта пыракан ял Совечĕ (2 стр.).
В. Данилов.—«Чăвашстрой» трест юлса пынине пĕтермелле (2 стр.).
Д. Бочаров.—Тĕнчери хăру-тăру (3 стр.).
К. Пайраш.—Ялти халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе лайăхлатар (3 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн пĕтĕмĕшле резолюцийĕ (3 стр.).
И. Григорьев.—Пĕр цехри хĕрсем (3 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ (4 стр.).
Албани Халăх Республикин посольствине пулни йышăну (4 стр.).
Чеджудо утравĕ çинчи тыткăнри çар çыннисен лагерĕнче американецсем тунă тискер ĕçсем (4 стр.).


## Выльăхсене лайăх пăхса хĕл каçарар

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, чи малтан, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăрт вăйлатасси çĕршыв пурнăçĕнче чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Парти, совет, ялхуçалăх органĕсен чи кирлĕ задачи вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç тĕсне çул юлса пынине пĕтересси, выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвасси, выльăхсемпе кайăк-кĕшĕк валли çуртсем çителĕклĕ тăвасси, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне татăклăн ÿстересси, выльăхсен хисепне халиччениччен пысăкрах хăвăртлăхсемпе ÿстерсе пырасси, унăн ăратлăхне лайăхлатасси тата çитес 2—3 çул хушшинче выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса кăларассине татăклăн ÿстересси пулать.

Çак задачăна ăнăçлăн татса парас тесен парти, совет, ялхуçалăх органĕсем енчен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн куллен тăрăшни, ун çине тимлĕн пăхни, ăна квалификациллĕ ертсе пыни кирлĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре выльăхсене хĕл лайăх каçарасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕçĕн ăнăçлăхне апат, ăшă витесем çителĕклĕ пулни, выльăхсене пăхма квалификациллĕ кадрсем уйăрни, фермăсенчи ĕçсене механизацилени татса парать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ парти, совет, ялхуçалăх органĕсене колхозсемпе совхозсенче хĕл каçарма хăваракан мĕнпур выльăх-чĕрлĕх валли апат тата витесем çителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ.

Тĕрĕслев материалĕсем çакна кăтартаççĕ: пирĕн республикăри нумай колхозсем выльăхсене хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленнĕ. Хăшпĕр колхозсенче утă-улăм [illegible] сĕтеклĕ апат, сăмахран, [illegible]

[illegible]сенче пăру, сысна, сурăх [illegible]не сăвакансем, конюхсем [illegible]ен. Ферма заведующийĕсем [illegible] таран çитмеççĕ. Çак фактсем [illegible] районсенчи парти, совет органĕсемпе вĕсен руководителĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн [illegible] Пленумĕн решенийĕсенчен, ССР Министрĕсен Совечĕпе [illegible] Комитечĕ выльăх-чĕрлĕх [illegible] малалла аталантарасси [illegible] решенийсенчен тивĕçлĕ [illegible] колхозсене çаплах çине [illegible] пыни çинчен калаççĕ.

Шăмăршă райсовет [illegible]рăвĕнче выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленни çинчен Мичурин [illegible] колхоз отчетне итлерĕ. [illegible] тухса тăрать: райсовет [illegible] ыйтăва хăйĕн ларăвĕнче [illegible] хатĕрленнĕ-ха? Ви[illegible] хатĕрленмен. Ыйтăва лару кун [illegible] те—ĕçĕ те пĕтнĕ. Палăрт[illegible] председательне, колхоз [illegible] илнĕ, вара ыйтăва [illegible] тытăннă. Мичурин ячĕпе [illegible] район центрĕнчен инçет[illegible] пĕр сăмахчĕ ĕнтĕ. Кол[illegible] килме вăхăт пулмарĕ, теме райсовет исполкомĕн председателĕ [illegible] юлташ. Анчах ун пек [illegible] сăлтав та çук. Мичурин [illegible] колхоз—район центрĕнчи, [illegible] колхоз. Райсовет исполкомĕн [illegible] исполком ларăвĕ пуçланиччен те фермăна кайса килме пулатчĕ. Васильев юлташ çакна курмасăр пулчĕ: колхозра иккĕмĕш сысна вити тăваççĕ. Анчах ăна [illegible] вĕçĕ те, хĕрри те курăнмасть, [illegible] кăларнă çĕрулми те уйра [illegible] юлнă. Колхоз выльăхсене [illegible] никăш енчен те хатĕрленсе [illegible] райсовет исполкомĕ колхозсем [illegible] хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине пек юрăхсăр, парти тахçанах [illegible] «тĕрĕслени» ĕçе тÿр[illegible]

летме, юсама, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмасть.

Çакна та палăртас пулать: выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçсем çавăн пек начар тăнă вăхăтрах, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе—выльăх апачĕ çитмест пулсан—сутăн илес, витесене юсаса, ăшăтса çитермен пулсан—юсаса çитерес, фермăсенче ĕçлеме кирлĕ кадрсем суйласа илес, вĕсенче ĕçлеме пултаруллă коммунистсемпе комсомолецсене уйăрса хăртас тĕлĕшпе питтех та сахал тунă-ха. Тĕрĕслев итогĕсене колхозсен пĕрлехи пухăвĕсенче кăна мар, правленисенче те чылай çĕрте сÿтсе явман.

КПСС райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем, вĕсен ялхуçалăх пайĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çакăн пек пăхнине пула кăçалхи октябрь уйăхĕнче майракаллă шултра выльăхсене вырăнсăр нумай салатса пĕтернĕ. Октябрь уйăхĕнче ĕнесен шучĕ ÿсес вырăнне 710 пуç таран чакнă. Ама выльăхсен йышĕ уйрăмах Ишлей районĕнче чылай чакнă.

Хĕл кунĕсенче выльăх апачĕпе пĕлсе усă курни, выльăхсене апата лайăх хатĕрлесе пани пысăк ĕç пулса тăрать. Пĕр колхозра та, пĕр фермăра та утă-улăма, тымарçимĕçсене çаплипех, хатĕрлемесĕр, ура айне пăрахса пани пулмалла мар. Вĕсене вĕтетсе, тураса, вакласа, пĕçерсе, пăслантарса памалла. Çакăн пек туни выльăх апачĕ расходлассине чакарать кăна мар, çавăн пекех, апатăн тутлăхне те ÿстерет.

Юлашки çулсенче пирĕн колхозсем выльăх апатне пăслантарса памалли, тымарçимĕçсене турамалли, çумалли, çĕрулмине хатĕрлемелли, турантă вĕтетмелли тата ытти машинăсем нумай туянчĕç. Анчах, калас пулать, çак машинăсемпе чылай фермăсенче çителĕксĕр усă кураççĕ. Çав вăхăтрах машинăсемпе усă курни выльăх апатне перекетлеме, сĕтеклĕ апат хатĕрлесе пама нумай пулăшать.

Çавăнпа пĕрлех фермăсенчи мĕнпур ĕçсене пур майсемпе те механизацилеме тăрăшмалла. Çакă вăл колхозниксен ĕçне çăмăллатнипе пĕрлех, выльăхсене пăхас ĕçе тĕрĕс организацилеме, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, ĕç кунĕсене перекетлеме май парать.

Выльăхсене тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарасси витесене ăшăтса çитернинчен нумай килет. Кашни колхозра мĕнпур выльăхсене хĕл каçарма кирлĕ чухлĕ витесем пулмалла. Выльăхсем сивĕ çĕрте тăни вĕсен тухăçлăхне чакарать. Çакăн пек ан пултăр тесен, мĕнпур витесене юсаса, ăшăтса çитерес ĕçе паян-ыран туса пĕтерес пулать.

Республикăри малта пыракан колхозсем выльăхсене хĕл каçарма пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕç. Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан, Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Вăрнар районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозсем тата ыттисем те выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне çултан-çул ÿстерсе пыраççĕ. Вĕсенче ĕçсем мĕншĕн çакăн пек ăнăçлăн пулса пыраççĕ-ха? Мĕншĕн тесен, вĕсем выльăхсене хĕл кунĕсенче те, çу кунĕсенче те, кĕркунне те, çуркунне те пĕр пекех лайăх пăхаççĕ. Кашни колхозра çавăн пек тума пулать. Кунта пурĕ те ĕç çине юратса пăхма пĕлни кăна кирлĕ. Çапла тума хушаççĕ парти, правительство, Тăван çĕршыв.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатасси—пĕтĕм халăх ĕçĕ. Тăван çĕршыв интересĕсем выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне малалла вĕçĕмсĕр ÿстерсе пыма хушаççĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлеме çирĕп никĕс тăвас, выльăхсем валли лайăх та ăшă витесем туса парас, фермăсене механизацилес ĕçсене парти, совет, ялхуçалăх органĕсем, мĕнпур ялхуçалăх работникĕсем тивĕçлипе тытăнсан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татăклăн вăйлатма пулать. Ăна пирĕн вăйлатмалла та.

## ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

### Парти кадрĕсен вĕренĕвĕ

ХАБАРОВСК. Кунта парти комитечĕсен лекторĕсен вунă кунлăх семинарĕ пулнă. Семинара Хабаровск тата Приморье крайĕсенчи, Бурят-Монгол АССР-ĕнчи, Чита, Амур тата Сахалин облаçĕсенчи лекторсем пухăннă.

Семинарта пулнисене теори ыйтăвĕсем тăрăх 20 ытла лекци вуласа панă.

Лекторсем хула çывăхĕнчи МТС-семпе колхозсене кайса курнă, унта ĕçре малта пыракансен опычĕпе тата çĕнĕ ялхуçалăх машинисемпе паллашнă.

ХАРЬКОВ. КПСС обкомĕ МТС-сенчи парторганизацисен секретарĕсен семинарне ирттернĕ. Унта КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине вĕреннĕ. Çавăн пекех МТС-сен ĕçĕнчи тĕп ыйтусем тăрăх тата агротехникăпа ялхуçалăхне механизацилес ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсем çинчен лекцисем вуласа панă. (ТАСС).

Украина ССР-ĕ. Н. С. Хрущев юлташ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕнче тунă докладра Житомир облаçĕнчи Радомышль районĕнчи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхозри звеньевой Марта Савишна Худолий пысăк çитĕнÿ туни çинчен каласа панă. Вăл ертсе пыракан звено çулленех кашни гектартан 600—800 центнер çĕрулми пухса кĕртет.

М. С. Худолий ертсе пыракан звено çĕрулмине ун умĕн кĕрхи тырăсем пулнă вырăна лартать. Тырă вырнă хыççăн тăпрана предплужникпа плугпа 25 сантиметр таранăш сухаласа хăвараççĕ. Кашни гектар çине 50—55 тонна тислĕк е торфпа тислĕк компосчĕ, калиллĕ минераллă удобренисем 2—3 центнер, суперфосфат 4 центнер, кĕл 6—7 центнер тăкаççĕ.

Колхозра пысăк тухăçлă пулакан «сеянец-419», «полесский», «сеянец-328» тата ытти сорт çĕрулми лартаççĕ. Вăрлăха пĕтĕмпех яровизацилеççĕ. Кăларса лартмалли кун çĕрулми вăрлăхĕ çине бактериллĕ удобрени—азотоген сапаççĕ.

1951 çултан пуçласа колхозра çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартаççĕ.

Колхозниксем çĕрулмине питĕ лайăх пăхса ÿстереççĕ. Звено çĕрулми уйĕнчи рет хушшисене виçĕ хут кăпкалатать.

Иртнĕ кĕркунне звено «сеянец-328» çĕрулмине кашни гектартан 883 центнер тата «сеянец-419» çĕрулмине кашни гектартан 850 центнер пухса кĕртнĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. С. Худолий.

С. СВЯТУН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

### Ялхуçалăхĕ валли

Çĕршыври заводсемпе фабрикăсен коллективĕсем колхозсене, МТС-сене тата совхозсене шефа илеççĕ, ялхуçалăхĕ валли продукци туса кăларассине ÿстерсе пыраççĕ.

Чăваш республикинчи промышленноçпа транспорт работникĕсем яла пысăк пулăшу параççĕ. Электроаппаратура завочĕн коллективĕ Шупашкар районĕнчи Ильич ячĕпе тăракан колхоза шефа илнĕ. Завод колхоза трансформатор подстанцийĕ тата парник рамисем туса парать. Сĕмĕрле районĕнче шеф ĕçĕ анлăн сарăлнă. Тирсăран экстракчĕ тăвакан заводăн электроэнерги хăйне кирлинчен ытлашши пур, вăл районти темиçе колхоза электроэнерги парса тăрать. Çавна май «Комбинат» ялхуçалăх артелĕ иртнĕ кĕркунне итем çинчи ĕçсене пĕтĕмпех механизациленĕ. Çак колхозра хăма çурмалли рама, арман, фермăна шыв парса тăракан механизмсем электричествăпа ĕçлеççĕ тата электричествăпа ĕçлекен машинăсемпе сурăх çăмĕ каснă.

Молодечно облаçĕнчи Воложински тата Юратишковски районĕсенчи промкомбинатсем Бубаньпе Брым облаçĕсенчи колхозсене парник рамисем, вĕллесем тата урапасем нумай ярса панă. Молодечно хулинчи промкомбинат кукуруза акмалли сеялкăсем туса кăларнă. Кун пек сеялкăпа кукуруза, сахăр кăшманĕ тата ытти пахча çимĕç культурисене тăваткал тĕмĕн акма пулать. Сморгоньри промкомбинат кормозапарниксем туса кăларма тытăннă. Облаçри тата виçĕ предприятире кормозапарниксем тума тытăнаççĕ.

Стерлитамакри (Пушкăрт АССР-ĕ) строительство машинисем тăвакан завод коллективĕ ялхуçалăхĕ валли трактор втулкисем 5 пин ытла туса панă, 11 уйăхри плана чылай ирттерсе тултарнă. Çавăн пекех тăваттăмĕш кварталта комбайнсем валли шестернясем туса кăлармалли плана та пурнăçланă. Стерлитамакри Ленин ячĕпе тăракан завод коллективĕ МТС-сен мастерскойĕсем валли çĕршер станок туса панă.

Хвойнински вăрманпромхозĕн (Новгород облаçĕ) куллен кирлĕ япаласем туса кăларакан цехĕ икĕ хваттерлĕ стандартлă çуртсем туса кăларма тытăннă. Кашни çуртра пурăнмалли икĕ пÿлĕм, кухня пур. Çакăн пек çуртсене Ульяновск, Воронеж, Грозный облаçĕсенчи тата ытти вырăнсенчи совхозсене ярса панă. Цех коллективĕ парник рамисем 800 туса хатĕрленĕ.

Ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС).

Мускав облаçĕ. Мария Дмитриевна Гортова 20 çул хушши ĕнтĕ малта пыракан «Лесные Поляны» совхозра доярка пулса ĕçлет. Вăл хăй пăхакан кашни ĕнерен çулленех 6—8 пин литр сĕт суса илет. М. Д. Гортова совхозра ĕçлеме пуçланăранпа мĕн пурĕ миллион литр сĕт суса илнĕ.

Çавăн пек çитĕнÿ тума доярка нумай тăрăшса ĕçленĕ. Малтанхи вăхăтра, совхоз тин çеç уралланма тытăннă, витесем çителĕклĕ пулман чухне, ĕнесем сĕт сахал панă. Ĕçе кĕрсен малтанхи кунсенчех пуçласа М. Д. Гортова ĕнесем мăнтăр пулччăр, сĕт нумайрах паччăр тесе тăрăшма тытăннă. Вăл ĕнесене тăрăшса пăхнă, тĕрĕс тата вăхăтра апат панă, витесене таса тытнă.

Çапла вăра ĕнесем сĕт хушсах пынă. Совхоз выльăх апачĕ нумай хатĕрлеме пуçласан, механизациленĕ витесем туса çитерсен, доярка ĕнесенчен чи нумай сĕт суса илме тăрăшма тытăннă. Ĕçри пысăк çитĕнÿсемшĕн М. Д. Гортова юлташа хисеплĕ ят—Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă.

Халĕ М. Д. Гортова совхозри чи лайăх доярка шутланать. Вăл кашни ĕнене лайăх пĕлет тата уйрăммăн пăхать. Гортова юлташ ĕнесене вĕсем юратса çиекен апатсем хатĕрлесе парать. Ĕнесене тата ĕне витисене те яланах питĕ таса тытать.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. Д. Гортова сырă вулать. Ун патне çакăн пек çырусем хамăр çĕршыври нумай вырăнсенчен килсе тăраççĕ.

Н. КУЛЕШОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

### Планран ирттерсе

БАКУ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Андреев ячĕпе тăракан завод нефть продукчĕсем туса кăлармалли 11 уйăхри плана тултарнă. Çулталăк пуçланнăранпа 2 пин тонна яхăн топливо тата миллион киловатт-сехет электроэнерги перекетленĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне чакарса, миллион тенкĕ ытла перекетлесе хăварнă.

### „Калиновая роща" ятлă фильм

КИЕВ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Киеври киностуди «Калиновая роща» ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм ÿкерсе пĕтернĕ. Çĕнĕ фильма А. Корнейчукăн пьеси тăрăх ÿкернĕ. «Калиновая роща» ятлă çĕнĕ кинокартинăна çывăх вăхăтрах кинотеатрсенче кăтартма пуçлаççĕ.

## Г. М. Маленков Великобритани Посолне сэр Уильям Хэйтера йышăнни

[illegible] çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче ССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков Великобритани Посолне сэр Уильям Хэйтера [illegible].

[illegible] йышăнура ССР. Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов [illegible]

### [illegible]ПСС Ленинград обкомĕпе хула комитечĕн пленумĕ

[illegible]ГРАД, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible] КПСС Ленинград обкомĕпе [illegible] пĕрлешÿллĕ пленумĕ пулнă.

[illegible] обкомĕн пленумĕ В. М. Андрианова [illegible] КПСС Ленинград обкомĕн [illegible] секретарĕн [illegible] хăтарнă [illegible] Игнатов юлташ КПСС Центральнăй Комитечĕн аппаратне [illegible] кунĕ [illegible] КПСС обкомĕн иккĕмĕш [illegible] тата Ленинград хула комитечĕн секретарĕн [illegible]

Пленум КПСС Ленинград обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Ф. Р. Козлов юлташа, КПСС Ленинград обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма Г. И. Воробьев юлташа суйланă.

КПСС хула комитечĕн пленумĕ КПСС Ленинград хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма И. К. Замчевский юлташа суйланă.

Пленум ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ хутшăннă.

## Хамăр республикăра

### К. Е. Ворошилов докладне чăвашла пичетлесе кăларнă

Чăваш АССР государство издательстви К. Е. Ворошилов юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1953 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче «Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарни» çинчен тунă доклада чăвашла пичетлесе кăларнă.

Кĕнеке тиражĕ—3.000 экземпляр.

### Çĕнĕ йĕркепе ĕç укçи илеççĕ

КЕПРЕС. МТС кантурĕнче агрономсем, зоотехниксем, трактористсем ĕç укçи илеççĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă тăрăх, агрономсемпе зоотехниксен, механизаторсен ĕç укçи чылай ÿснĕ.

Саккăрмĕш трактор бригадинче ĕçлекен пĕртăван Петрпа Георгий Денисов трактористсем сезонти задание 160 процент пурнăçланă. Çĕнĕ йĕркепе октябрь уйăхĕшĕн П. Денисов 774 тенкĕ, Г. Денисов—1.005 тенкĕ ĕç укçи илчĕç. Çавăн пекех октябрь уйăхĕшĕн Н. Яковлев бригадир 784 тенкĕ, çав бригадăри тракторист И. Ильин 1.089 тенкĕ, ытти бригадăсенчи трактористсем Н. Шмагин—759 тенкĕ, А. Лукин—887 тенкĕ илчĕç.

Н. ТИХОНОВ.

### УЧИТЕЛЬСЕМ ЗАОЧНО ВĔРЕНЕÇÇĔ

ШАХАСАН. Çĕнĕ Чăлкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсенчен чылайăшĕ заочно вĕренет. Учительницăсем Ф. Морозова Шупашкарти педагогика институтĕнче, Н. Герасева Горькинчи ют чĕлхесем вĕренмелли институтра, М. Петрова [illegible] учительсен институтĕнче вĕренеççĕ.

В. НЕСТЕРОВ

### ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани

Çак кунсенче Шупашкарта, Советсен çуртĕнче, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕн заместителĕ Д. Я. Митьков юлташ ССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсем тăрăх наградăланă çынсен пысăк ушкăнне орденсемпе медальсем панă.

Сывлăха сыхлас ĕçре нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн врачсемпе ытти работниксем орденсемпе медальсем илнĕ. Шупашкар аэроклубĕн медицина службин начальникне П. И. Иванов-Овчинников юлташа Ленин орденĕ панă. Шупашкарти ача çуратмалли çуртра ĕçлекен акушерка О. Ф. Алексеева тата Чăваш АССР Сывлăх министерствин главнăй терапевчĕ П. Н. Осипов юлташсем Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсем илнĕ.

Шупашкарти ача çуратмалли çуртра ĕçлекен врач Л. А. Осанова, Сĕнтĕрвăрринчи ача-пăча консультацийĕн заведующийĕ С. Ф. Павлова врач, Çĕрпÿ район больницинчи медицина сестри Н. И. Софонова, республикăн юн яракан станцийĕн медицина сестри С. С. Смирнова, республикăн сивĕ чире хирĕç кĕрешекен станцийĕн фельдшерĕ П. С. Цветков юлташсене «Хисеп палли» орденĕсем панă.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль çак юлташсем илнĕ: Н. А. Воскресенская—Шупашкарти ача больницинчи медицина сестри, Е. В. Голованова—çак больницăри врач, Б. Г. Захарова—фармацевт, Шупашкарти пĕрремĕш аптекăри рецептор-контролер, А. Ф. Коршикова—врач, Сывлăх министерствин санитарнăй инспекторĕ, Т. Е. Никитина—Шупашкарти ача çуратмалли çуртра [illegible]

О. В. Николаева—республикăн сивĕ чире хирĕç кĕрешекен станцийĕн лаборантки.

Чугун çул çинче нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн Хусан чугун çулĕ çинчи работниксенчен А. В. Андренчев юлташа—Шупашкар станцийĕн транспортпа экспедици кантурĕн начальникне, А. Ф. Чибизова юлташа—çул-йĕр мастерне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль çак юлташсем илнĕ: М. А. Александрова С. В. Васильев—станцири дежурнăйсем, М. В. Егорова—стрелочник, М. П. Павлов—разъезд начальникĕ, Х. П. Рубцова—çул-йĕр обходчикĕ, А. Ф. Садиков—çул-йĕр обходчикĕ, С. М. Тарасов—çул-йĕр бригадирĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе нумай вăхăт хушши лайăх ĕçленĕшĕн Сĕнтĕр районĕнчи ялхуçалăх управленийĕн начальникне И. А. Кожаков юлташа—Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, Шупашкар машинăпа трактор станцийĕн зоотехникне А. С. Михайлова юлташа—«Хисеп палли» орденĕ панă. «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль çак юлташсем илнĕ: М. Т. Волкова—Сĕнтĕр районĕнчи зоотехник, Е. П. Петрова—Красноармейски машинăпа трактор станцийĕнчи главнăй зоотехник, М. Т. Сорокин—Шупашкар районĕнчи ветеринари врачĕ, Ф. Я. Яковлев—Сĕнтĕр районĕнчи главнăй зоотехник.

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин главнăй зоотехникне И. Ф. Стасенко юлташа «Ĕçре палăрнăшăн» медаль панă.

Наградăланă юлташсене Митьков юлташ орденсемпе медальсем пана [illegible] сăмах каланă, малашнехи ĕçре [illegible]

### Ялти библиотекăра

ПАТĂРЬЕЛ. Анат Туçа ялĕ варринче икĕ хутлă пысăк çурт ларать. Çуртăн аялти хутĕнче клуб тата библиотека вырнаçнă.

Библиотекăна А. Мясников колхозник пырса кĕчĕ. Унăн аллинче кĕнекесем.

— Аван кĕнеке, ăнланмалла, çăмăл чĕлхепе çырнă. Чăн-чăн пурнăçа сăнатса парать,—тет вăл библиотека заведующине Г. Заплаткин юлташа Я. Ухсай çырнă «Çул» романа тавăрса парса.

— Кăмăла кайрĕ эппин? Тата мĕнле кĕнеке парас сире?—ыйтрĕ Заплаткин юлташ.

Çакăн пек ăнлă сăмахсем кĕнеке вулакансенчен тăтăшах илтме пулать. Библиотекăна колхозниксем, учительсем, вĕренекенсем кулленех нумай çÿреççĕ, унта вĕсем хăйсене кирлĕ кĕнекесем илсе вулаççĕ. Кашни кун 30 çын кĕнеке илет.

Библиотекăри кĕнекесен фончĕ çулсеренех пуянланса пырать, халĕ кĕнекесен шучĕ икĕ пинтен иртнĕ. Вăл шутра В. И. Ленин, И. В. Сталин сочиненийĕсем, М. Горький, А. Толстой, А. Чехов тата ытти писательсен кĕнекисем, Мичурин, Лысенко сочиненийĕсем тата ытти тĕрлĕрен литература нумай. Кăçал библиотека валли виçĕ пин тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем илнĕ.

Библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен йышĕ куллен ÿсее пырать. Халĕ вĕсен йышĕ 300 çынна çитет.

Библиотека кĕнекесене пропагандăлас тĕлĕшпе начар мар ĕçлет. [illegible]

В. ИГНАТЬЕВ.

# Комсомол кадрĕсене куллен вĕрентмелле

Шăхасан районĕнчи комсомол организацийĕн конференцийĕ ВЛКСМ райкомĕн отчетне сÿтсе явнă.

Районти комсомолецсем колхозсемпе предприятисем умĕнче тăракан хуçалăхпа-политикăлла задачăсене пурнăçлас ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Жданов ячĕпе, Ленин ячĕпе, Калинин ячĕпе, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомол организацийĕсем çамрăксем хушшинче социализмла ăмăртăва пуçарса, малта пыракан опыта, ялхуçалăх наукипе практикин тунă çĕнĕ çитĕнÿсене производствăра сарса пыраççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозри В. Петров комсомолец ертсе пыракан бригада кăçал пысăк тухăçлă тыр-пул пухса кĕртнĕ. Бригада кашни гектартан 19-шар центнер çурхи тулă туса илнĕ.

Конференцире 19 çын тухса каларĕ. Вĕсем ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕç.

Иртнĕ çул политшкулсемпе кружоксем начар ĕçленĕ. Политшкулсемпе кружоксен ĕçне кăçал та тивĕçлипе йĕркелемен. ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем занятисем мĕнле иртни çинчен пĕлмеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Н. Антонов юлташ хăйĕн докладĕнче комсомолецсен политикăлла вĕренĕвĕ çинчен çиелтен çеç каларĕ.

17 комсомолец клубсемпе вулав çуртĕсен заведующийĕсем пулса ĕçлеççĕ. Анчах вĕсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Клубсенче тата вулав çурчĕсенче çамрăксен каçĕсемпе вулакансен конференцийĕсем сахал пулаççĕ.

Суворов ячĕпе тăракан, «Красный Октябрь», «Дружба», «Победа» колхозсенче комсомолецсемпе союзра тăман хăшпĕр çамрăксем колхоз производствинче сахал ĕçлеççĕ. Çак колхозсенче ĕçкунĕсен минимумне тултарман комсомолецсем те пур.

ВЛКСМ райкомĕ шкулсенчи комсомолпа пионер организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пырать. 1953—1954 вĕренÿ çулĕн пĕррĕмĕш чĕрĕкĕнче 1.242 çын вĕренÿре ăнăçсăр пырайман.

Тухса калакансем ВЛКСМ райкомĕ физкультурăпа спорт ĕçне çителĕксĕр ертсе пыни çинчен каларĕç.

ВЛКСМ райкомĕ комсомол организацийĕсен секретарĕсемпе семинарсем сахал ирттерет.

— Мана кăçал райисполкомăн финанс пайĕнчи комсомол организацийĕн секретарĕ пулма суйларĕç,—терĕ Белоруссова юлташ,—анчах эпĕ план тума та, комсомол хуçалăхне йĕркелесе пыма та пĕлместĕп. Райком çамрăк секретарьсене вĕрентесси çинчен шухăшламасть те.

МТС агрономĕ Н. Скворцова юлташ ВЛКСМ райкомĕ комсомол организацийĕсен ĕçĕпе сахал интересленни çинчен калакан тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ. Райцентрти «Красный Октябрь» колхозри çамрăксем комсомол организаци секретарĕ пулса кам ĕçленине пĕлмеççĕ.

Делегатсем райком тата пуçламăш организацисем йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн активлăн кĕрешменнине палăртрĕç. Райком бюровĕнче сÿтсе явмалли ыйтусене час-часах тĕплĕн тишкерсе тухмасăр хатĕрлеççĕ. Пленумсемпе актив пухăвĕсем вăхăтра пулса иртмеççĕ. Çакă вăл критикăпа самокритикăна сарма, райком ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн уçса кăтартма ванçĕрлет.

Кудряшов юлташ ВЛКСМ райкомĕнчи работниксем хăйсен идейăлла-политикăлла пĕлĕвне, ĕçри ăсталăха ÿстерес пирас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртать. Делегатсем ВЛКСМ Чăваш обкомĕ районти комсомол организацине çителĕксĕр пулăшни çинчен каларĕç.

Конференци районти комсомол организаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă мерăсем йышăнчĕ. ВЛКСМ райкомĕн çĕнĕ составне тата комсомол организацийĕн облаçри конференцине каймалли делегатсем суйларĕ.

Г. ЛУЧ,
В. ВЕСЕЛОВ.

# Йышăннă решенисене тĕплĕн пурнăçламалла

Советски районĕнчи комсомол организацийĕн конференцийĕнче ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ А. Бузина юлташ отчетлă доклад туса пачĕ.

— Комсомолăн районти организацийĕ ыйшки вăхăтра колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсенче парти организацийĕсемпе колхоз правленийĕсене хăйăхрах пулăшса пыма тытăнчĕ,—терĕ докладчик.

Кунпа пĕрлех конференци комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем хăйсен пултарулăхне кирлĕ таран кăтартманнине палăртрĕ. Районти колхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур пулин те, чылай комсомол организацийĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа сахал интересленеççĕ. ВЛКСМ райкомĕ ку тĕлĕшпе пуçарулăх кăтартмасть.

МТС-ри комсомол организацийĕ 44 члена пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенчен чылайăшĕ трактор бригадисен бригадирĕсем, трактористсем пулса ĕçлеççĕ. Анчах хăшпĕр комсомолецсем ĕç пахалăхĕшĕн сахал тăрăшаççĕ, сменăри нормăсене тултарса пымаççĕ, горючи ытлашши расходлаççĕ. Комсомолецсем хушшинче агитациллемассăлла ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Кунти комсомол организацийĕ ĕçĕсем çинчен ВЛКСМ обкомĕнче тата комсомол райкомĕнче сÿтсе явнă, анчах çав решенисем пурнăçа кĕмен.

Союзра тăман çамрăксем хушшинче çителĕксĕр ĕçлеççĕ. 60 пуçламăш организацирен 23-шĕнче отчетлă тапхăрта пĕр çамрăка та комсомола илмен. Отчетлă тапхăрта хĕрачасене комсомол ретне пачах сахал илнĕ.

Комсомол организацийĕсен секретарĕсем час-часах улшăнса тăраççĕ. Комсомол группиcем ĕçлемеççĕ. Комсомолецсене шута илесси, член укçи пухасси йĕркеллĕ пулса пымасть. ВЛКСМ райкомĕн членĕсенчен чылайăшĕ ĕçре пĕтивлăх кăтартмаççĕ.

ВЛКСМ обкомĕн инструкторĕ Ковалева юлташ района килсен икĕ колхоза пулчĕ. Анчах колхозсенчи комсомол организацийĕсене нимĕнле пулăшу та памарĕ. Август уйăхĕнче района ВЛКСМ обкомĕнчен Максимов юлташ килчĕ те пĕр колхоза кайса курмасăрах районтан тухса кайрĕ. ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Иванов юлташ района килсен, КПСС райкомне кăна кĕрсе тухрĕ. Колхозсене кайса курмарĕ, ВЛКСМ райкомне те кĕрсе тухма «ерçмерĕ», терĕç делегатсем.

Карсаков юлташ районта физкультурăпа спорт ĕçĕ çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Физкультурăпа спорт мероприятийĕсене шкул ачисене çеç хутшăнтараççĕ, колхозсенчи çамрăксене аякка тăратса хăвараççĕ.

А. ЛУКИН.

Выранти Советсенче

# Малта пыракан ял Совечĕ

Иваньково-Удельнăй ял Совечĕ—районта малта пыракан ял Совечĕсенчен пĕри. Унăн ĕçри тĕрекĕ—депутатсемпе ялти актив. Куликов, Митин тата Валуева депутатсем, активистсенчен Севастьянов, Яшин тата Коноплева юлташсем ял Совет ĕçне пĕрмаях активлă хутшăнаççĕ. Ялан-хи комиссисем хуçалăхла-политикăлла ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслеççĕ, пахă сĕнÿсем параççĕ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Юлашки вăхăтра ялти актив КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине тата унтанпа СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ хуçалăхăн тĕрлĕ отраслĕсене тата сутуилĕве аталантасси çинчен йышăннă решенисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе нумай ĕçлет.

Ял Совечĕн сессийĕсенче тата исполком ларăвĕсенче ял пурнăçĕнчи çивĕч ыйтусене тата колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетессипе çыхăннă ыйтусене сÿтсе яваççĕ, йышăннă решенисене пурнăçлас ĕçе организацилеççĕ. Ял Совечĕ хăйĕн депутачĕсем урлă колхозра ĕçсем мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăрать, колхозниксене умра тăракан ĕçсене вăхăтра пурнăçлама мобилизацилет.

Ял Совет территорийĕнчи «Победа» колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕ. Гектартан вăтам шутпа 100 пăт тырă туса илчĕ. Кăçал колхоз пĕтĕмпе 1 миллион та 100 пин тенкĕлĕх тупăш илме пултарчĕ. Махорка 300 пин тенкĕ тупăш пачĕ. 1953 çулшăн колхоз выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем районта чи малтан парса татнă. Планран ирттерсе сĕт сутма договор туса, çав договора пурнăçланă, 31 пин литр сĕт сутнă, çавăншăн колхоз груз турттармалли автомашина илнĕ. Колхозра кашни ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм тырă, 3-шер тенкĕ укçа, 2,8-шар килограмм çĕрулми, 2-шер килограмм сахăр кашманĕ тата 1,5-шер килограмм утă валеçсе параççĕ.

Ял Совечĕн исполкомĕнче колхозра обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явнă чухне выльăх витисене октябрĕн 1-мĕшĕччен туса пĕтерме тата юсама хушса хăварнă пулсан, çав ĕçсене вăхăтра туса пĕтернĕ.

Колхозниксем хушшинче политикăллармассăлла ĕçе анлă сарни, партипе правительство решенийĕсем çинчен ăнлантарса пани вĕсен ĕçри хастарлăхне ÿстернĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшнă. Сăмахран, Р. Шигалова, В. Куликова, Н. Шигалова колхозницăсем артель хуçалăхĕнче сахал ĕçленĕ пулсан, халĕ кашни кунах ĕçе тухаççĕ.

Ял Совечĕ финанс планне уйăхран уйăха ăнăçлă тултарса пырать. Ял Совет территорийĕнчи вицĕ шкула, ача яслине, вулав çуртне, икĕ фельдшер пунктне тытса тăма яланах вăхăтра укçа парать.

Н. КОЛЕСОВ.

Улатăр районĕ.

# Депутатсене ĕçе ытларах хутшăнтармалла

Район Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ Юманай ял Совечĕ мĕнле ĕçлени çинчен сÿтсе яврĕ. Докладчик тата пренире тухса калакансем ял Совечĕн ĕçри çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене палăртрĕç.

Выранти Советсен суйлавĕ пулнăранпа ял Совечĕ хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатнă, колхозсене тата учрежденисене тимлĕрех ертсе пыма пуçланă.

Анчах ял Совечĕн кулленхи ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Вăл çитменлĕхсен сăлтавĕ çакăнтан лайăх курăнать. Ял Совет исполкомĕ сессисем ирттерессине хавламасть, вĕсене сайра хутра çеç пухать. Çавна пула пĕр сессире 4—5 ыйту пăхса тухмалла пулать. Сесси пулмалли кун çинчен вăхăтра пĕлтермеççĕ. Депутатсем сессиче сахал тухса калаççĕ. Вĕсене кулленхи ĕçе кирлĕ пек явăçтармаçть. Депутатсенчен чылайăшĕ ку тарана çитсе те суйлавçăсем умĕнче отчет туса паман.

Ял Совечĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана пурнăçлас енĕпе юлса пырать.

Г. АНДРЕЕВ.

Калинино районĕ.

# Колхоз клубĕнче

СĔМЕРЛЕ. «Красный Октябрь» колхоз клубĕ кулленхи ĕçе тĕрлĕ формăсемпе туса пырать. Вăл наукăпа политика пĕлĕвĕсене халăх хушшинче сарас, ĕçсыннисен культурăна йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçсене тĕрĕс йĕркелесе пырать.

Кунта клуб заведующийĕ пулса вунпĕрмĕш çул ĕнтĕ П. Новиков юлташ ĕçлет. Вăл хăй ĕçне пĕлсе, юратса туса пырать. Клуб çумĕнче лекторсен группи ĕçлет. Унта 16 çын шутланать. Кăçалхи çул лекторсен группи вăйĕпе 73 тĕрлĕ лекцисем ирттерчĕ. Лекцисене колхозниксем тимлĕн итлеççĕ. Уйрăмах П. Захаров, М. Леонтьева, П. Федоров юлташсем ирттерекен лекцисем ăнăçлăн иртеççĕ. Халĕ клубра партипе правительство юлашки вăхăтра йышăннă постановленисем çинчен докладсемпе калаçусем пулса иртеççĕ.

Клубра тухса тăракан стена хаçачĕ колхозри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшать. Унта малта пыракансен опычĕсем çинчен тата уйрăм çитменлĕхсем çинчен час-часах çыраççĕ. Иртнĕ çулсенче А. Еремеев юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади ялхуçалăх ĕçĕсене кая юлса туса пынă. Çакăн çинчен стена хаçатĕнче çырнă хыççăн бригада ыттисенчен малта пыракан пулчĕ.

Клубăн библиотека пур. Унта 2.500 ытла кĕнеке пур. Вулакансен йышĕ çулсеренех ÿссе пырать.

Клуб çумĕнче хор, драма, литература кружокĕсем ĕçлеççĕ. Унта çамрăксем йышлăн хутшăнаççĕ. Кăçалхи çул А. Семенова учительница ертсе пыракан хор коллективĕ республикăра пулса иртнĕ юрă праçникĕнче пулма тивĕçлĕ пулчĕ.

Пуçламăш парторганизаци клуб ĕçĕпе яланах интересленет. Клуб ĕçне ялти актив та хутшăнать.

Клуб пурне те пĕрлештерекен вырăн пулса тăчĕ.

В. СТЕФИНОВ.

# „Чăвашстрой“ трест юлса пынине пĕтермелле

Партипе правительство пурăнмалли çуртсем, коммунальнăй предприятисем туса хума çулсерен укçа-тенкĕ нумай уйăраççĕ. Çавă вăл ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн тăрăшнине кăтартать.

Пирĕн республикăра пурăнмалли çуртсене, коммунальнăй предприятисене, тĕпрен нисен, «Чăвашстрой» трест туса пырать. Çапла вара, республика правительстви паракан укçа-тенкĕпе вăхăтра тата тухăçлă усă курасси трест ĕнерлĕ ĕçлениченчен нумай килет.

Кăçал трест янăх ĕçлет. Виçĕ кварталти плана 63,4 процент, çулталăкри плана 52,2 процент кăна тултарнă. Çакă вăл трест кăçалхи плана пурнăçлама вăхăтра хатĕрленсе çитменнинчен сахал мар килнĕ.

Кăçалхи пĕррĕмĕш çур çулта экскаватор çук пирки тăпра чавассине алă вĕççĕн туса пынă. Педагогика институчĕн çуртне тунă çĕрте кăна алă вĕççĕн 1.800 кубометр тăпра кăларнă. Бетономешалкăсем çителĕклĕ пулман, çавăн пирки хăшпĕр стройкăсенче бетона алăпа туса хатĕрленĕ. Çавăн пекех строительство материалĕсене çĕклеме илсе хăпартмалли механизмсем пулман, кирпĕчпе ытти материалсене рабочисем хăйсем çĕкленĕ.

Паллах, йывăр ĕçсене механизацилемени ĕç тухăçлăхне ÿстерме кансĕрленĕ. Кашни рабочи пуçне 9 уйăх хушшинче вăтам шутпа 19.801 тенкĕлĕх ĕç тумалла пулнă пулсан, 16.443 тенкĕлĕх çеç тунă е плана 82,7 процент тултарнă. Çапла вара, ĕç тухăçлăхĕ енĕпе плана тултарманнине пула строительство ĕçĕсен планне 747 пин тенкĕлĕх тултарайман.

Плана пурнăçлама кирлĕ чухлĕ йывăç пулманни те чăрмантарнă. 1952 çулта касса хатĕрлеме панă вăрман шурлăхлă вырăнта пулнă, ăна çуллахи вăхăтра касса хатĕрлеймен, хĕлле кăна вăштах касма май килнĕ. Çулла, хĕрсе ĕçлемелли вăхăтра, Чăваш АССР Госпланĕн айăпĕпе, трест йывăç материалсемсĕр ларнă, çавăн пирки ĕнтĕ пединститут строительствинче маччана е урай хуртисем валли халĕ те йывăç çук. Республика больницин терапевт корпусне кирпĕчрен купаласа çитернĕ, анчах стропилсем лартма йывăç кирлĕ. Октябрь уйăхĕ çитсен кăна треста вăрман урăх участокра панă, вара унта пин кубометра яхăн йывăç касса хатĕрленĕ, 300 кубометр йывăçа Атăл урлă каçарнă, 400 кубометрне Атăл леш енчи çырана илсе тухнă.

Ăнăçлă ĕçлеме ытти строительство материалĕсем çителĕксĕр пулни те кансĕрленĕ. Сăмахран, трестра рабочисем çуртсем тунă çĕрте кашни кун 40 пин кирпĕч таран купалама пултараççĕ, çав хушăрах кăçал августăн 1-мĕшĕнче 22-мĕшĕ хушшинчи вăхăтра трест кунсерен 7 — 15 пин штук таран çеç кирпĕч илсе тăнă. Сентябрьте вара цемент т. ыт. кирлĕ япаласем çителĕклĕ пулман.

Трест йывăç материалсем хатĕрлемелли предприятие лайăх йĕркеленĕ, анчах тимĕрпе бетон конструкцийĕсене туса хатĕрлемелли предприяти çук. Республикăри больница строительствинче бетон тумалли пеха ку таранччен ĕçе яман.

Плана çителĕксĕр пурнăçлани строительствăна хаклантарнă. Трестăн администрацине управлени аппаратне кирлĕ таранах укçа илсе тăнă, çав хушăрах ĕç пурнăçланса пыман, çапла вара 9 уйăх хушшинче трестăн накладной расхочĕсем 69 пин тенкĕ чухлĕ ÿссе кайнă. Строительство ĕçĕсен хакĕ ÿсесси ытти сăлтавсенчен те килнĕ. Сăмахран, трест 9 уйăх хушшинче строительство хакне 261,7 пин тенкĕлĕх ÿстерсе палăртнă пулсан, ăна 315 пин тенкĕ тăкак тунă.

Ĕç тухăçлăхĕ енĕпе плана тултарманни трестран хăйĕнчен килекен сăлтавсем те пулнă. Тÿрех каламалла: ĕçе тивĕçлипе организацилемен, çавăнпа та стройкăра ĕçсĕр тăни е ĕç кунĕпе туллин усă курманни час-час пулать. Рабочисем тепĕр чухне хăйсем ĕçленĕшĕн мĕн чухлĕ укçа илессине пĕлмеççĕ, мĕншĕн тесен ĕçе тухас умĕн рабочисене нарядсем памаççĕ. Нарядсене вара уйăх иртсе чухне е çитес уйăхри 10—15-мĕшĕсенче çеç çырса параççĕ. Ĕçшĕн çавăн пек йĕркепе тÿлени ĕç тухăçлăхне ÿстерме май памасть, сдельнăй йĕркепе ĕç укçи тÿлемелле туни хут çинче кăна юлать.

Стройкăпа çыхăнман ĕçсемшĕн пысăк расходсем тунă. Сăмахран, пĕррĕмĕш кварталта кăна çулсене тасаттарнăшăн 42,5 пин тенкĕ расходланă. Кăçалхи февральте çанталăка пула ĕçлемесĕр тăнăшăн 6,9 пин, простойсемшĕн тата рабочисене пĕр объектран тепĕр çĕре куçарнипе çур çул хушшинче 14 пин тенке яхăн, çуртсен çÿлти хучĕсене купалама пуçамасем туса тата вĕсене сÿтсе 9 уйăх хушшинче нормăран ирттерсе 67 пин тенкĕ расходланă. Çапла вара, трест кăçалхи 9 уйăх хушшинче рабочисен ĕç укçин фончĕнчен ирттерсе 199 пин тенкĕ расходланă.

Çавăн пек çитменлĕхсем пирки трест укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен йывăрлăх тÿсет. Хăйĕн оборотри укçи-тенки çителĕклĕ мар пирки трест строительство материалĕсем хатĕрленĕ чухне те, рабочисене ĕç укçи панă вăхăтра та укçасăр аптăрать.

1954 çулта пурăнмалли çуртсем тума тата рабочисен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатма укçа-тенкĕ нумай уйăрса пама палăртаççĕ. Çакна калас та çитет: Улатăрти коммунальнăй электростанцие, Шупашкарти пединститута тата ыттисене тума кăна, 1953 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытла укçа-тенкĕ параççĕ. Унсăр пуçне Шупашкар хулинче 49 хваттерлĕ пурăнмалли çурт, 440 ача вĕренмелли шкул тума палăртнă. Çапла ĕнтĕ трест тумалли ĕçсен программи, 1952 çулхипе танлаштарсан, 152 процент, 1953 çулхи программăран 64 процент ÿсет.

Паллах, трест кăçалхи ĕçсен программине тултараймарĕ пулсан тата ĕç малалла та çавăн пекех пулса пырсан, вăл 1954 çулхи программăна пурнăçлама та йывăртарах пулĕ.

Строительство материалĕсене тиесе пушатнă тата турттарнă, вăрман хатĕрлесе кăларнă çĕрте машинăсемсĕр ĕçлес [illegible] вĕрене пĕтерме вăхăтра [illegible] 9 уйăх хушшинче [illegible] материала (хăйăр, [illegible] металл) турттарнă [illegible] ĕçе алă вĕççĕн [illegible] çулта автокрансемпе [illegible] лать.

Трестăн кирпĕче [illegible] ма тытăнмалла, ун [illegible] пушатас ĕçсене пĕтĕм[illegible] çĕ. Рабочисем валли [illegible] тата 1954 çулта 200[illegible] общежитие туса çитĕр[illegible] ĕç укçи тÿлес йĕрке[illegible] мелле, рабочисем хуш[illegible] лантару ĕçне лайăхлат[illegible] ăмăртăва сарнипе ĕç[illegible] мелле.

Производство плана[illegible] лĕн хатĕрленесен, трест[illegible] тальнăй строительство[illegible] пултарать тата çавна[illegible]

Чăваш АССР К[illegible]
управляю[illegible]

# Пропагандистсене пулăшасси—парти библиотекисен хисеплĕ задачи

Парти вĕренĕвĕн пахалăхĕ тата унăн идейăлла-теорилле шайĕ çулти пусăмра пулассин пуринчен малтан, пропагандистран килет. Çавăнпа та пропагандистсен ĕçне тивĕçлипе ертсе пырасси, вĕсен вĕренĕвне лайăх организацилесси парти библиотекисен чи кирлĕ ĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Çакна шута илсе КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотеки кăçалхи вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа пропагандистсем валли тăтăшах консультацисем, семинарсем, лекцисем тата теорилле калаçусем ирттерет.

Хулара пурĕ 436 пропагандист. Вĕсем кружоксемпе политшкулсене ертсе пыраççĕ, коммунистсемпе кадрсене марксистла-ленинла теорипе хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă, çурри ытла тăвататшар-пиллĕкшер çул пропагандист е консультант пулса ĕçленĕ.

Пропагандистсен теорилле пĕлĕвне ÿстерес шутпа кăçалхи вĕренÿ çулĕнче эпир хулара 18 илалхи семинар йĕркелерĕмĕр. Вĕсенчен: парти хула комитечĕн библиотекинче 8 семинар ĕçлет, ыттисем вара Чапаевски тата Сосновка поселокĕсенчи, электроаппаратура заводĕнчи тата Шалти ĕçсен министерстви çумĕнчи парти библиотекисенче ĕçлеççĕ. Семинарсене теори тĕлĕшĕнчен лайăх хатĕрленнĕ юлташсем — педагогика тата ялхуçалăх институчĕсенче ĕçлекен преподавательсем ертсе пыраççĕ.

Кăçал эпир семинар занятийĕсене ирттерме сентябрь уйăхĕнчех тытăнтăмăр. Занятисем уйăхра икĕ пулаççĕ. Хулара парти вĕренĕвĕ пуçланнăранпа пурĕ 36 занятие ирттертĕмĕр.

Кашни семинар руководителĕ ĕç планĕ тунă. Унта теорилле тата методикăлла лекцисем пулма палăртнă, пропагандистсен ĕçри практикăлла ыйтусене творчествăлла сÿтсе явассине кĕртнĕ.

Семинарсенче политшкулсемпе кружоксенче ирттермелли занятисен планĕсене сÿтсе яваççĕ, пропагандистсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашаççĕ. Унсăр пуçне вĕсем уйрăм темăсем тăрăх наглядлăй пособисем хатĕрлесси тата вĕсемпе мĕнле усă курасси çинчен, тема тăрăх мĕнле конспект çырмалли çинчен кăтартусем илеççĕ. Çак ыйту тăрăх вĕренÿ çулĕ пуçлансан семинар участникĕсем валли ятарласах лекци ирттертĕмĕр.

Рефератсем çырса, вĕсене сÿтсе явни уйрăмах усăллă. Çакă пропагандистсене теори уйрăм ыйтăвĕсене тĕплĕн ăнланса илме пулăшать, первоисточниксем тăрăх харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçри хăнăхусене пуянлатать. Çавăнпа пĕрлех семинар руководителĕ пропагандистсен тавракурăмĕпе тата пĕлĕвĕпе, вĕсем темăн тĕп ыйтăвĕсене пĕтĕçтерсе анализ тума пĕлнипе паллашма пултарать.

Çак ĕçе пирĕн библиотекăра акă мĕнле йĕркеленĕ. Семинар руководителĕ кружоксенче вĕренмелли çитес тема тăрăх лекци вулана вăхăтра виçĕ-тăватă теорилле тĕп ыйту кăларса тăратать. Семинар участникĕсенчен виççĕшĕ е тăваттăшĕ çав ыйтусене хăйсем ирĕкĕпе суйласа илеççĕ те ăна тĕплĕн вĕренме тытăнаççĕ, ун хыççăн реферат çырса çав ыйту тăрăх семинарта доклад туса параççĕ. Паллах, семинар руководителĕ пропагандиста реферат планне тума пулăшать, уйрăм ыйтусем тăрăх консультацисем ирттерет, кирлĕ сĕнÿсем парать.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах, реферат çырманнисемсĕр пуçне, семинара çÿрекен ытти пропагандистсем те çав ыйтусем тăрăх материала тĕпĕсĕн вĕренеççĕ. Доклад хыççăн вара вĕсем реферата сÿтсе явас ĕçе активлă хутшăнаççĕ—докладри çитменлĕхсене палăртаççĕ, хушса калаççĕ. Сăмахран, ноябрĕн 10-мĕшĕнче политшкул руководителĕсен семинарĕнче Жуков пропагандист «Марксизм-ленинизм классем тата класс кĕрешĕвĕ çинчен» ятлă тема тăрăх реферат хатĕрлесе доклад туса пачĕ. Çав семинар занятийĕ интереслĕ, активлă иртрĕ. Семинарта пулнă пропагандистсем ыйтусем чылай пачĕç. Алексеев тата Кошеев пропагандистсем хушса каларĕç. Юлашкинчен семинар руководителĕ Бустарникова юлташ тема тăрăх пĕтĕмĕшле вывод туса каларĕ.

Пропаганда ĕçĕнчи опытпа паллашас шутпа пропагандистсем пĕр-пĕрин занятийĕсене çÿреççĕ. Çак кунсенче, сăмахран, Давыдова пропагандист Жуков ертсе пыракан кружокăн черетлĕ занятийĕнче, Жуков пропагандист вара Шапошникова ертсе пыракан кружокăн занятийĕнче, семинар руководителĕ Бустарникова юлташ Кашеев пропагандист ирттерекен занятире пулчĕç. Семинарăн черетлĕ занятийĕнче вара вĕсем çав пропагандистсен ĕçĕсем çинчен хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа параççĕ.

Семинар руководителĕсем, иртнĕ çулхи çитменлĕхсене шута илсе, пропагандистсен ĕçри творчествăлла пуçарулăхне анлă сарса ярасси çине уйрăмах тимлĕ пăхаççĕ.

Паллах, семинарсем пропагандистсене пысăк пулăшу параççĕ. Çакна ăна парти вĕренĕвĕн малтанхи занятийĕсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ. Малтанхи темăсем тăрăх пур çĕрте те занятисем илем тĕлĕшĕнчен çÿлти пусăмра иртрĕç. Сăмахран, пир-авăр комбинатĕнчи парти историне марксизм-ленинизм пропагандистĕсем тăрăх вĕренмекен кружок руководителĕ пулса Тихомиров юлташ ĕçлет. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарни çинчен занятие ирттернĕ чухне пропагандист хăй çав темăпа лайăх пĕлни палăрчĕ. Вăл унччен çав тема тăрăх ирттернĕ семинар занятийĕнче те тата консультацире те пулчĕ. Унсăр пуçне Тихомиров юлташ Ленинпа Сталин Сочиненийĕсене чылай вуланă. Занятие активлăн иртрĕ. Пропагандист материала ăнлантарса панă чухне теорилле ыйтусене практикăлла ĕçсемпе çыхăнтарса, пурнăçри, уйрăмах комбинат ĕçĕнчи тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пачĕ.

Пирĕн библиотекăра тăтăшах хулари кружоксемпе политшкулсенче вĕренекен коммунистсемпе партире тăман актив йышлăн пулаççĕ. Вĕсем е занятире ăнланман ыйтусене ыйтса пĕлме, е кирлĕ литература илме пыраççĕ. Сăмахран, октябрь уйăхĕнче кăна библиотекăра 1.065 çын пулнă, вĕсем 1.622 кĕнеке илнĕ.

Паллах, парти библиотекисен консультантсене тата марксизм-ленинизма харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене те тивĕçлĕ пулăшу памалла. Вĕсене пулăшас майпа библиотекăра пĕччен е ушкăнпа консультацисем ирттерессине, справкăпа библиографи ĕçне кирлĕ пек йĕркеленĕ.

Тепĕр чухне çапла та пулать: тĕрлĕ сăлтавсем пирки хăшпĕр пропагандистсем лекцие е семинара пыраймаççĕ. Çак ыйтусем тăрăх вĕсем тепĕр вăхăтра пĕччен е ушкăнпа консультаци илеççĕ.

Пропагандистсене тата харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшас тĕсе библиотека çĕнĕ кĕнекесене анлăн пропагандлать, çав кĕнекесене вулама сĕнсе списоксем, аннотацисем туса хатĕрлерĕ. Унсăр пуçне, библиотекăра пропагандистсем валли «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарни», «Халăх ырлăхĕшĕн», «СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕн решенийĕсем», «КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕсем», «Пĕтĕм тĕнчери миршĕн пыракан кĕрешÿ» ятлă выставкăсем организацилерĕмĕр.

Çавăн пекех пропагандистсемпе кружоксенче вĕренекенсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес шутпа эпир уйрăм ыйтусем тăрăх каталогсем тăвас ĕçе йĕркелерĕмĕр. Тĕрлĕ темăсем тăрăх хаçатсенче пичетленсе тухнă интереслĕ статьясене, сăмахран, «Марксистла-ленинла теорие вĕренекенсене пулăшма», «Тĕнчене—мир», «Промышленность», «Ялхуçалăх», «Новаторсен опычĕ» тата ытти ыйтусемпе те уйрăм папкăсене пухатпăр. Вĕсемпе яланах семинар руководителĕсемпе консультантсем, пропагандистсемпе харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем усă курма пултараççĕ.

Пирĕн библиотекăра марксистла-ленинла литература, хаçат-журналсем, справочниксем тата наглядлăй пособисем çителĕклĕ. Библиотекăн кĕнеке фончĕ кашни çулах пуянланса пырать. Кăçал та çĕнĕ кĕнекесем, наглядлăй пособисем нумай туянтăмăр.

Нумаях пулмасть пропагандистсене çĕр улмине тăваткăл тĕмĕн лартмалли меслет çинчен кинофильм кăтартрăмăр, торфпа çĕрĕк тăпри чÿлмекĕ тăвассипе паллаштарма Шупашкарти тарзасем юсакан завода экскурсие илсе кайрăмăр.

Пысăк предприятисемпе учрежденисенчи парти библиотекисем те пропагандистсене пулăшас тĕлĕшпе лайăх ĕçсем туса ирттереççĕ. Сăмахран, семинарсен занятийĕсенче усă курма наглядлăй пособисем хатĕрлес тĕлĕшпе Чапаевски поселокри парти библиотеки пахă пуçару турĕ. Библиотека заведующийĕ К. Баймуратова юлташ поселокри комсомолецсем пулăшнипе, чылай темăсем тăрăх наглядлăй пособисем çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Çак ĕçе вăл пропагандистсене те хутшăнтарнă. Кунта вĕренÿ планĕсенче кăтартнă темăсем тăрăх яланах произведенисен выставкисене йĕркелеççĕ, тĕрлĕ справка илмелли материалсем (кĕнекесем) суйласа хураççĕ, пропагандистсене тата кружоксемпе политшкулсенче вĕренекенсене кирлĕ кĕнекесене вăхăтра тупса параççĕ.

Электроаппаратура заводĕнчи парти библиотекинче пропагандистсемпе кружоксенче вĕренекенсем валли [illegible] тăвăсем тăрăх лекцисем ирттерессине лайăх [illegible] ĕçе ялхуçалăх специалисчĕсене хутшăнтарнă. Библиотекăра А. Михайлова юлташ [illegible] сем тăрăх выранти [illegible] пухнă, тĕрлĕ диаграммăсем [illegible]

Пирĕн ĕçре пысăк [illegible] пур-ха. Час-часах [illegible] сене пропагандистсен [illegible] мест. Тепĕр чухне [illegible] сем активлă иртмеççĕ [illegible] начар пулать; вĕрен[illegible] республика умĕнче [illegible] çителĕксĕр çыхăнтар[illegible] Лекцисене те хулари [illegible] дистсем çÿремеççĕ. [illegible] зацисем те вĕсенчен [illegible] ĕçĕпе çителĕксĕр [illegible] гандистсен ĕçне тăт[illegible] рассине эпир тивĕçли[illegible] Çавăнпа та хальхи [illegible] пĕр кружоксемпе пол[illegible] тисем çÿрĕккĕн ирт[illegible] теорилле шайĕ, вĕрен[illegible] сăк мар.

Тата çакăн пек [illegible] çĕ: хăшпĕр учрежд[illegible] кружоксемпе политшк[illegible] пухусем е канашлус[illegible] ирттерме чăрмантар[illegible] торг директорĕ Цвет[illegible] пуçламăшĕнче [illegible] хăтрах канашлу [illegible] чен чылайăшне [illegible] се кайнă.

Парти хула [illegible] партин XIX-мĕш с[illegible] сем тăрăх ĕçлес[illegible] квалификацине ÿсте[illegible] не хăвартрах [illegible] логиллĕ ĕçе малалла [illegible] шать.

КПСС Шупаш[illegible]
пропаганд[illegible]
заведую[illegible]

# Ялти халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе лайăхлатар

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ СССР ялхуçалăхне малалла аталантарасси çинчен йышăннă постановлени ялти мĕнпур ĕçе, çав шутра сывлăх органĕсен ĕçне те тĕпренех улăштарса çĕнетме хушать. Ялта санитарипе профилактика ĕçне вăйлатни, чирчĕрсене чакарни колхозниксен ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшмалла. Анчах ялти халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕç пирĕн республикăра халĕхи вăхăтра çителĕклĕ вырăнта тăмасть-ха. Сăмахран, 7 участокри больницăсенче тата 8 амбулаторире халĕ те врачсем çук, нумай районсенче врач-специалистсем (хирургсем, терапевтсем, хĕрарăм чирĕсенчен сыватакан врачсем) çитмеççĕ. Врачсем пĕр вырăнта, пуринчен ытла ялта, сахал вăхăт ĕçлени палăрать. 1952 çулта республикăра ĕçлеме çĕнĕрен 57 врач килнĕ пулсан, республикăран 56 врач тухса кайнă. Çакă вăл ялсенче врачсене пурăнма тата ĕçлеме кирлĕ условисем туса паманнинчен килет.

Халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе хуласенче диспансерла майпа туса пыраççĕ. Çак çĕнĕ май кашни çынна врачсем сăнаса пыма, чирлесен вăхăтра сыватма пулăшать. Ялти вырăнсенче диспансерла меслетпе ĕçлессине Вăрмар районĕнчи Арапуç больницинче кăна лайăх йĕркеленĕ-ха, ытти больницăсенче, пуринчен ытла Шупашкар, Калинино, Комсомольски, Йĕпреç, Первомайски, Красноармейски тата Сĕнтĕр районĕсенче çак ĕç пуçланманнипе пĕрех.

Ялти больницăсенчи тепĕр çитменлĕх — оборудовани тата халăха кирлĕ әмелсем сахал пулни. Медснаб тата Чăвашаптекоуправлени халиччен ял çине сахал çавăрса пăхнă.

Ялти халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе лайăхлатасси çинчен медицина работникĕсен профсоюз обкомĕн пленумĕнче ятарласа сӳтсе явнă. Кун хыççăн Сывлăх министерствипе медицина работникĕсен профсоюзĕн обкомĕ ку ĕçе вăйлатма мĕнле ĕçсем туналлине палăртнă.

Врачсем çук больницăсене тата амбулаторисене хуласемпе районсенчен врачсем яраççĕ. Сăмахран, Первомайски районĕнчи Турхан больницине тата Муркаш районĕнчи Йӳçкасси больницине Шупашкар больницинчи врачсем, Канаш районĕнчи Янкăлч больницине Канаш больницинчи врачсем каяççĕ тата ытти те. Çавнашкалах фельдшер-акушер пункчĕсене те хуласемпе районсенчен тивĕçлĕ специалистсем кайса пулăшмалла.

Ялти халăха квалификациллĕ медицина пулăшăвĕ парас ĕçе вăйлатас шутпа Шă[illegible] больницине акушер-гинеколог, [illegible] больницине — акушер-гинеколог [illegible]ст тата терапевт янала тустарнă. [illegible] институт Калинино, [illegible], Вăрмар Йĕпреç, Первомайски, [illegible]рбаш тата Шăхасан районĕсенче [illegible]. Ялта куç чирĕсенчен сыватас шутпа [illegible] сарать, куç чирĕсенчен [illegible] вырăнтах операци тума инструктора парать. Туберкулезнăй [illegible] Шупашкар, Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле, Етĕрне, Вăрмар, Куславкка тата Йĕпреç МТС-сенче ĕçлекенсене тата вĕсен çемйисене тĕрĕслесе туса, чирлисене сыватассине хăй çине илет.

Çитес вăхăтра Шупашкарта, Çĕмĕрлере тата Улатăрта флюрографи кабинечĕсем уçăлаççĕ, Муркаш, Комсомольски, Шăхасан, Вăрмар тата ытти районсенче пневмоторакс хуракан кабинетсем тăваççĕ. 1954 çулта ӳпке тата шăмă туберкулезĕпе чирлĕ çынсем валли ятарласа санатори уçма палăртса хунă. Ялти пур больницăсенче те лабораторисем пулаççĕ. Чурачăк, Красноармейски тата Патăрьел больницисенче Сывлăх министерстви сутăнпа сыватакан кабинетсем уçать.

Ялти врачсене квалификацине ӳстерме пулăшас шутпа Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле, Сала, Çĕрпӳ тата Етĕрне больницисем çумĕнче кĕске сроклăх курссем йĕркелеме палăртнă.

Колхозсенче санитарипе профилактика ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем пулса иртеççĕ. Сăмахран, 1954 çулта кашни МТС-па колхозрах çынна малтанхи пулăшу паракан санитари посчĕсем пулаççĕ, колхозниксенчен санитари уполномоченнăйĕсем кашни районтах 50—60 çын вĕрентсе хатĕрлеççĕ, ялта ĕçлеме кайма халĕ курсра 30 дезинфектор вĕренет, санитари учрежденийĕсем колхозсене шефа илсе тасалăх ĕçне йĕркелеме пулăшаççĕ.

Вырăнти больницăсене çитес вăхăтрах диспансерла меслет çине куçса ĕçлеме хушнă. Чи малтан МТС-сенче ĕçлекенсен, ялхуçалăх специалисчĕсен тата ĕç кунĕн минимумне тултарайман колхозниксен сывлăхĕсене тĕрĕслесе тухмалла 1954 çулта Шупашкар, Йĕпреç тата Октябрьски районĕсенче Шупашкартан врач-специалистсем ярса кăтартуллă диспансеризаци ирттерме палăртнă.

Медицина пулăшăвĕ илме хулана пыракан колхозниксене хулари больницăсенчи врач-специалистсен тĕплĕрех тата черет вĕттерсе пурăнтармасăр йышăнмалла. Çак ĕçе хăшпĕр больницăсем пурнăçа кĕртсе пыма тытăннă та ĕнтĕ. Сăмахран, Шупашкарти поликлиникăра ялтан килнĕ колхозниксене черете çырмаççĕ, çав кунах йышăнаççĕ.

Ялти халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе вăйлатма сывлăх органĕсене вырăнти партипе совет тата профсоюз органĕсем куллен-кун пулăшса пымалла. Çак пулăшу халиччен çителĕклĕ пулманни больницăсене вăхăтра юсаманнинчен, больницăсенче час-часах хутма вутă çитменнинчен тата ыттинчен те курăнать. Хут çинче рентген кабинечĕсем 15 районта пур, анчах вĕсенчен çурри те ĕçлемест. Вĕсенчен нумайăшĕ йĕркеллĕ ĕçлеме пулăмсем çук тата çутă паман пирки ĕçлемеççĕ.

Колхозниксем медицина учрежденийĕсенчен квалификациллĕ пулăшу илме тивĕçлĕ. Çак ĕçе кирлĕ пек туса пыма пирĕн условисем пур. Ялти халăха медицина пулăшăвне парас ĕçе пур енчен те лайăхлатса пырар.

Врач К. ПАЙРАШ.

# Пĕр цехри хĕрсем

Зоя Шаронова, ялахи пекех, смена улшăниччен чылай малтан ĕçе тухрĕ. Цеха кĕрсенех вăл ФЗУ инструкторĕпе Наталия Кирилловна Ивановăпа тĕл пулчĕ.

— Сана икĕ машинăпа ĕçлеттерес шĕн,— терĕ Иванова.— Мĕнле, килĕшес шухăш пур-и?

— Карпеева та иккĕпе ĕçлеме пуçлать-и?— интересленчĕ Шаронова.

— Паянтан вăл та икĕ машина çине куçать.

— Апла эпĕ те унтан юлмастăп,— кăмăллăрĕ Шаронова.— Эпĕ вĕренсе çитрĕм ĕнтĕ, сирĕн шанăça тӳрре кăларма пулатăп.

Зоя Шаронова Шупашкарти пир-авăр комбинатне çултала каялла ĕçе кĕме тесе пынă. Вăл кадрсен пайĕнче документсене кăтартнă та, производствăна яма ыйтнă.

Хĕрачана ФЗУ-на йышăннă та ровничнăй цеха янă. Екатерина Карпеева та унтах пулнă.

Шароновăна ФЗУ-ри комсомол организацийĕн секретарьне суйланă. Ун хыççăн вăл юлташĕсемпе тата ытларах интересленме, Иванова инструктора пулăшма пуçланă.

Ровничнăй цехра пĕтĕмпе çирĕм улттă хĕр вĕреннĕ. Вĕсенчен çирĕмпиллĕкĕшĕ çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнăскерсем пулнă. Пĕр Галина Ланцова кăна пилĕк çул вĕреннĕ. Кăткăс машинăсене вĕренме уншăн ытла та йывăр пулнине Наталия Кирилловна та, Зоя Шаронова та курнă, ытти хĕрсем те асăрханă. Раиса Борисова та вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман. Çак тĕслĕх Шароновăна пăшăрхантарнă. Вырăсла начартарах пĕлекен Ланцова машина пайĕсене асра тытайман, инструктор калаттисене пурпе те ăнланса юлайман.

Пĕр кунхине Наталия Николаевна ровничнăй машинăн сульчă çиппине туртса кăларакан аппарат ĕçленипе паллаштарнă. Галина Ланцова инструктора тимлесе итленĕ пулин те, аппарат çинчен пĕр сăмах та каласа парайман, ăна ĕçе яма, унти хăюсене майлаштарма пултарайман. Вăл вăтаннă, хăшпĕр хĕрсем шӳтлени те ăна пĕтĕмпех арпаштарса янă.

— Çук, вĕренейместĕп,— тенĕ Ланцова йĕрсе ярасси патне çитсе,— ыранах урăх цеха куçатăп.

— Урăх цехра çăмăл тесе шутлатăн-и?— ыйтнă хĕрсенчен пĕри.

— Апла пулсан урăх ĕçе каятăп.

Хĕрсем ăна ӳкĕтлеме пуçланă.

Тепĕр кунне Ланцова ĕçе пыман. Галина ФЗУ-ран пăрахса кайни инструктора, комсомол организаци секретарьне хумхантарнă.

Ĕç хыççăн Ивановăпа Шаронова Ланцова патне кайма ниймă.

— Эпир юрнех сирĕн пата килтĕмĕр,— пĕлтернĕ Иванова хĕрачана сывлăх сунса.— Эсир ĕçе тухманнишĕн хĕрсем пурте пăшăрханаççĕ.

— Вĕренейместĕп пулĕ, пĕлӳ сахал,— хурланса ответленĕ Ланцова. Инструктора куçран пăхма хăяйман.

— Эсир хăраса ан ӳкĕр-ха,— лăплантарнă Шаронова.— Эпир сана пурте пулăшма пултатпăр. Хăвăрăн çеç тимлĕрех пулмалла.

Иванова хăй ровничницăна вĕренни çинчен каласа панă. Ăна та вĕренме çăмăл пулман. Вăл Шупашкарти пир-авăр фабрикине 1951 çулта кĕнĕ. Малтанхи кунсенче ăна машинăсен шавне хăнăхма та йывăр пулнă. Çапах хăраса ӳкмен, кăткăс техникăна вĕренме тăрăшнă, мастер помощникĕпе ровничница ăна çине тăрсах пулăшнă.

Çур çул ытларах вĕреннĕ хыççăн Ивановăна пир-авăр комбинатне куçарнă. Вăл икĕ ровничнăй машинăпа ĕçлеме пуçланă, хăварт хăнăхса çитнĕ. Малта пыракан ровничницăпа ăмăртса, часах ыттисенчен мала тухнă. Вăл уйăхри нормăна икĕ хута ытла ирттерсе тултарма пуçланă. Лайăх ĕçленĕшĕн иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче ăна Хисеп грамоти парса наградăланă.

Иванова хăй ĕçне питĕ лайăх пĕлнĕ. Кашни йĕкене тĕрĕслесе тăнипе пĕрлех, машина мĕнле ĕçленине сасăранах пĕлме питĕ нумай пулăшнă. Пĕр-пĕр кăлтăкпа машина чарăнсан, Иванова мастер помощникне чĕнсе чăрмантарман, хăех тӳрлетме тăрăшнă, йĕкесене улăштарса лартмалли вăхăта чакарса пынă, çиппе сыпмалли çĕнĕрен те çĕнĕ меслет шыранă. Ровничницăсем сульчă çиппе ывăç тупанĕпе пĕтĕрсе сыпнă, Иванова икĕ пӳрнепе сыпсан хăвăртрах пулнине кăтартса панă.

Ланцова ăна пĕр сăмах хушмасăр итленĕ.

— Хĕрсем куласран хăратăп,— тĕрĕслесех каланă Ланцова.

— Хĕрсем сире пулăшасшăн,— ответленĕ Шаронова.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Кăçалхи август уйăхĕнче ФЗУ-ра вĕренекенсем пĕррремĕш испытани тытрĕç.

Çирĕм улттă ровничница хăйсем тĕллĕн ĕçлеме пуçланă. Зоя Шаронова, Екатерина Карпеева, Лидия Данилова нумаях пулмасть икшер машинăпа ĕçлеме пуçларĕç.

Çамрăксем нормăна уйăхран уйăха ирттерсе тултараççĕ. З. Шаронова, Е. Карпеева, Л. Данилова, В. Арапова ровничницăсем октябрь уйăхĕнчи нормăна 130—140 процент тултарчĕç. Г. Ланцовăпа Р. Борисова та паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем октябрьти нормăна 128—130 процент пурнăçланă.

Зоя Шаронова производствăра кăна мар, обществăлла ĕçре те пуçарулла. Цехри комсомол организацийĕн секретарĕ пулнă май, союзра тăман çамрăксене хаçат-журнал вуласа парать, политзанятисене хатĕрленме пулăшать. Ровничницăсем пурте комсомолăн пуçламăш политкружокĕнче вĕренеççĕ.

— Вĕренме те, пурăнма та нумай пулăшрĕç мана,— хавхаланса каласа парать Галина Ланцова.— туссем пулăшни маншăн нимрен те паха пулчĕ.

... Çутă та таса цехсенче кунĕн-çĕрĕн машинăсен сасси кĕрлесе тăрать. Çĕнĕ машинăсем умĕнче шурă саппун çакнă хĕрсем ĕçлеççĕ. Акă, Зоя Шаронова машинине хăварт тĕрĕслесе тухрĕ те, йĕкесене улăштарса лартрĕ, кайран икĕ машинине хута ячĕ. Çĕршер йĕкесем пĕр харăс кĕрлесе, тикĕссĕн çаврăнма пуçларĕç. Работница кашни йĕкене сăнаса тăрать. Акă, вăл пĕр йĕкери çип татăлнине асăрхарĕ те, машинăна чарса, кăлтăка сăнама пуçларĕ. Çав вăхăтра хăйĕнчен писех те мар тăракан Галина машинине чара-чара тĕм аппаланнине асăрхарĕ. Шаронова татăлнă çине хăварт сыпрĕ те, юлташĕ патне пычĕ.

— Мĕн пулчĕ?— ыйтрĕ ровничница.

— Темшĕн çип çаплах татăлать,— машинăри кăлтăка тупаймасăр каларĕ Ланцова.

Шаронова çип туртакан аппарата уçса пăхрĕ те, мĕн пулнине тавçăрса илчĕ.

— Куратăн-и, Галя, аппарата мамăк тулнă,— терĕ вăл хăюсем çине ларса тулнă мамăкпа тусана шăлса тасатса.— Çаксем чăрмантараççĕ сана. Хăюсене те пĕлсе майлаштармалла.

Çав вăхăтра инструкторпа Лидия Данилова пырса тăчĕç. Наталия Кирилловна туртакан аппарата мĕнле сăнаса тămаллине тата тасатмаллине тепĕр хут ăнлантарса пачĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

# Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн пĕтĕмĕшле резолюцийĕ

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сесси калаçусем ирттересси тăма чĕнсе каланине ĕçсыннисем хĕпĕлĕн ырласа кĕтсе илчĕç. Çак кампанипе пула, тĕнчери хирĕçӳсене пуринщĕн те юрăхлă килĕшӳсен тунипе татса памалла текен шухăш-кăмăл ытларах та ытларах саралса пырать, çĕнтерӳсем тума пулăшать.

Корейăри вăрçă ĕçĕсене чарса лартни мир ĕçĕн çĕнтерĕвĕ пулса тăчĕ.

Германие илес пулсан, аслă державăсем хушшинче юлашки вăхăтра нотăсем улăштарса илни тăватă державăн конференцине кĕске вăхăтра пухма май пурри çирĕплетсе парать.

Индо-Китая илес пулсан, вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси тата ыйтăва мирлĕ майпа татса парасси çинчен тăракан шухăш Францире, çавăн пекех Вьетнамри общественность хушшинче ытларах та ытларах саралать.

Анчах тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатассине хирĕç тăракан вăйсем «калаçусем» текен сăмахпа сивĕ вăрçа малалла туса пырассине пытарса тăрас ĕçре усă кураççĕ. Хăйне пĕрле калаçакан çынна пулса тунă фактсем умне тăратни калаçусемшĕн тăрăшнине пĕлтермест; Калаçусене чарса лартакан условисем тăратма хăтланни—калаçусемшĕн тăнине пĕлтермест.

Азире те, Европăра та хăшпĕр районсенчи лару-тăру тата хăшпĕр хирĕçӳсем мир ĕçĕшĕн уйрăмах хăрушлăх пулса тăраççĕ.

Корейăри калаçусем—хăрушлăх умĕнче. Нейтральнăй çĕршывсене, уйрăммăн илсен, Индие политикăлла конференци составĕнчен кăларма тăрăшни (Индие, тĕпрен илсен, Азие интересĕсене палăртса тăрать) калаçусене пĕтерсе лартма пулăшать. Халăхсем Корейăра вăрçă ĕçĕсене тепĕр хут пуçласа яма ирĕк памĕç.

Европа хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсем Германи ыйтăвне хăвăртрах татса пама хушаççĕ. Вăл ыйтăва çакăн пек татса парассине тăватă держава—США, СССР, Англи тата Франци—хушшинче килĕшӳсем тунипе кăна тума пулать. Çакăн пек килĕшӳ тăвас çĕрте пĕртен-пĕр чăрмав вăл пĕр енĕ Германи милитаризмне тепĕр хут çĕклеме, Германие тепĕр енне хирĕç тăракан çар пĕрлешĕвне кĕртме тăрăшни пулать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ Европăри халăхсене «Европа çарĕ» çинчен тунă договора çирĕплетессине тата Германи милитаризмне кирек мĕнле формăпа та тепĕр хут тăвассине хирĕç тăма чĕнсе калать. Çапла майпа Германи ыйтăвне тăватă держава хушшинче килĕшӳ тумалла çул уçăлнă пулĕччĕ. Вăл килĕшӳ нимĕç халăхне мирлĕ пулăслăх туса парĕ. Европăри мĕнпур халăхсене Германире агрессиллĕ вăйсем урăх пулмĕç тесе шантарĕ.

Францие Вьетнам хушшинче çичĕ çул хушши ĕнтĕ вăрçă пырать. Çак вăрçа çапăçакан енсем хушшинче тӳрех калаçусем ирттернипе кăна чарма пулать. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ ку тĕлĕшпе Демократиллĕ Вьетнам Республикин делегацийĕ тăратнă сĕнĕве тата Китай Халăх Республикин делегацийĕ çав сĕнӳ майлă пулнине ырлать. Ку сĕнӳ çине Франци делегацийĕ кăмăллă ответ пачĕ. Çак сĕнӳ ыйтăва мирлĕ майпа татса памалли никĕс пулма пултарать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ яланах çакна çирĕплетсе калать: çĕршыври ĕçе ют çĕршывсем хутшăнни, ют çĕршывсен çарĕсем оккупацилени, ют çĕршыв территорийĕсем çинче çар базисем туни халăхсен никама пăхăнманлăхĕшĕн тата мир ĕçĕшĕн хăрушлăх пулса тăрать.

Çакăн пек политика пурнăçланса пыни Сывлăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче, Латинла Америкăра, Африкăра палăрать. Вăл уйрăммăнах Европăра палăрать. Унта «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» тума хăтланаççĕ, Испанире Америкăн атомлă базисене тăваççĕ. Ку политика Азире те саралнă. Унта ют çĕршывсем оккупацилеççĕ, Японие тепĕр хут хĕçпăшалланатарасси вăйланать. США Пакистанра çар базисем тума хăтланать. Ку вăл вăрçă вăрçас шухăш-кăмăл çĕр миллионшар çынсем хушшинче саралассине пĕлтерет.

Хĕçпăшалланасси ӳссе пыни тата халăха йышлăн вĕлермелли хĕçпăшалсене туса кăларни пĕтĕм тĕнчешĕн чăтма çук пысăк йывăрлăх тата пысăк хăрушлăх пулса тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери мир Совечĕ Стокгольмри Воззвани çине алă пустарас кампани пынă вăхăтра тата Варшаври конгресăн решенийĕнче пĕтĕм тĕнчене çак ыйту çине тимлĕн пăхма чĕнчĕ. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ çак ыйтусем тăрăх ООН халиччен те килĕшӳ туманнишĕн пăшăрханнине палăртать. Вăл çавăн пек сĕнӳ парать: атомлă тата бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курассине чарса лартассишĕн, мĕнпур йышши хĕçпăшалсене чылай чакарассишĕн, çак ĕçсене мĕнле пурнăçланине чăннипех те контроллесе тăмалла тăвассишĕн малалла та тăрăшмалла.

Юлашкинчен, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ çакăн çинчен аса илтерет: мĕнпур уйрăм ыйтусем тăрăх калаçусем пуçлама кирлĕ пулсан, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ, тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалли чи кирлĕ майсенчен пĕри вăл пилĕк аслă державăсен конференцийĕ пулать тесе шутланă, халĕ те çапла шутлать.

Çав конференци унта хутшăннă кирек мĕнле çĕршыв пуçарăвĕ тăрăх кирек мĕнле ыйтăва та, ăна тĕнчери йывăр лару-тăрăвăн сăлтавĕсенчен пĕри тесе шутлаççĕ пулсан, сӳтсе явма, пуриншĕн те юрăхлă пĕтĕмĕшле килĕшӳсем тума пултарать.

Тĕнчери ĕçсене татса парас çĕрте Китай Халăх Республики тĕнчери инстанцисенче законлă вырăн йышăнма тивĕçлине йышăнманни пилĕк аслă державăн конференцине пухас çĕрте чăрмав пулса тăрать.

Китай Халăх Республикине йышăнма килĕшменни мĕнпур государствăсен интересĕсене хирĕç пырать. Тĕнчери общественность çакна ытларах та ытларах сиснет.

Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕ халăхсене çирĕп мир тума май паракан хатĕр пулса тăрать. Халăхсем Устава пурнăçлаттарассишĕн кĕрешмелле. Устава пăсма хăтланни пирки пĕтĕм тĕнче пысăк йывăрлăхсем умне туха тăчĕ. Тепĕр хут Устава çирĕп пурнăçласа ĕçлеме тытăнни халăхсене хăйсен хăрушсăрлăхĕпе никама пăхăнманлăхне туса хума пулăшĕ, нацисем хушшинче, вĕсен экономикăлла ресурсĕсене, пурнăçпа культура ыйтăвĕсене аталантарас тĕллевпе, пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме май парĕ.

Сивĕ вăрçă пирки тата вăскаса хĕçпăшалланнипе пула, халăхсен пăшăрханупа шиклĕх, чухăнлăхпа нуша тӳсме тивет.

Халăхсем кĕрешнипе çав пысăк йывăрлăха пĕтерме пулать, пĕтермелле те. Мир кун-çулĕ çак кĕрешӳрен те нумай килет.

# Тĕнчери лару-тăру

## [illegible] ВĂХĂТРИ ЧИ КИРЛĔ ЫЙТУ

[illegible] Генеральнăй Ассамблейин сакăр[illegible]ĕнче совет делегацийĕ «Тĕн[illegible] вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас [illegible]ери çĕршывсем хушшинчи йы[illegible]-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе ту[illegible]ĕсем çинчен» тăратнă ыйту [illegible] ыйту пулнă. Çак ыйту мĕнпур [illegible] халăхсене питĕ хумхантарать. [illegible]сем çак ыйтăва кирлĕ пек татса [illegible] кĕтеççĕ.

[illegible] делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсене уçă[illegible] лайăх каласа панă. Сĕнӳсенче [illegible] водородлă тата халăха йышлăн [illegible] ытти йышши хĕçпăшалсемпе [illegible] чарма, çакна тĕрĕслесе тăма [illegible]ăчипе çирĕп контроль туса хума, [illegible]семпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарма, [illegible] ют çĕршывсен территорийĕсенчи [illegible]сене пĕтерме, çавăн пекех чы[illegible]италнзмла çĕршывсенче çĕнĕ вăр[illegible]ланнине туса пынине сивлеме [illegible]. Çак сĕнӳсене пурнăçа кĕртни [illegible] çĕршывсем хушшинчи йывăр [illegible]ăва чăннипех çăмăллатма май [illegible] пулĕччĕ. Анчах вăл мир тăшманĕ[illegible] пачах килĕшмест.

[illegible] представителĕсем совет делега[illegible] сĕнĕвĕсен шухăшне пăсса кăтартас [illegible] тăрăшнă. Вĕсем Совет Союзĕ [illegible] Совет Союзĕ Пĕрлешӳллĕ [illegible]сен хăрушсăрлăхне «хăратса [illegible] тесе калама та иментсе тăман. [illegible] çакăн пек чее ĕçсем çынсене уl[illegible] пултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен [illegible] çакна питех те лайăх [illegible]: США-ри агрессиллĕ ушкăнсем [illegible] ĕнтĕ миршĕн хăрушлă[illegible], çак ушкăнсем тĕнчери йы[illegible]-тăрăва çăмăллатассине интерес[illegible].

[illegible] те палăрать, Пĕрлешӳллĕ Штатсем [illegible] «сивĕ вăрçă» политики [illegible], ют çĕршывсен территорийĕсем çинче çар базисем йышлăн тунипе, агрессиллĕ блоксем тунипе, Хĕвеланăç Германие тата Японие милитаризацилес ĕçе вăйлатнипе пĕр вăхăтра пулса пырать. США-н çар расхочĕсем бюджетăн 74 процентне йышăнаççĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсене никам та хăратса тăмасть пулин те, Америка правительстви халĕхи вăхăтра çарта тăватă миллион çынна ялан тытса тăрать.

Çак фактсем США совет делегацийĕ панă сĕнӳсене мĕншĕн йышăнманнине лайăх ăнлантарса параççĕ.

Çакна палăртни кирлĕ: совет делегацийĕ Генеральнăй Ассамблейăн малтанхи сессийĕсенче те çакăн пек сĕнӳсем панă. Анчах США представителĕсем, «сасăламалли машинăпа» усă курса, кашниннех çак сĕнӳсене йышăнман.

Паллă ĕнтĕ, 1952 çулхи март уйăхĕнче Совет Союзĕ килĕшӳ тума сĕнчĕ. Çав сĕнӳре атомлă хĕçпăшалпа усă курма тата ăна туса хатĕрлеме чарма, малтан туса хатĕрленĕ бомбăсемпе гражданла тĕллевсене пурнăçланă çĕрте кăна усă курма палăртнă. Çак килĕшĕве мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăма пĕтĕм тĕнчипе контроль туса хума палăртнă пулнă. США çак конкретлă сĕнĕве хирĕç тăнă, ун вырăнне «Барух планне» кăларса тăратнă. Вăл план государство суверенитечĕн принципĕсене хирĕç пыракан юрăхсăр сĕнӳ çинче никĕсленсе тăрать. Вăл сĕнӳ тăрăх, атомлă энерги туса кăлармалли мĕнпур хатĕрсене «пĕтĕм тĕнчери контроль органĕн» харпăрлăхне памалла. Çав органта, паллă ĕнтĕ, Америка монополийĕсем пуç пулса тăнă пулĕччĕç.

Çакăн пек орган туса хупи США-па атомлă бомбăсем туса кăларма малашне те чăрмантарманнине ăнланса илме йывăр мар. Совет делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский сĕнӳре Америкăн официальнăй документĕсене те кăтартнă. Вăл документсенче тӳрех çапла каланă: «Барух планĕ» ĕçе кĕни Пĕрлешӳллĕ Штатсенче атомлă бомбăсем туса кăларассине чакарма палăртмасть. Совет делегацийĕн сĕнĕвĕ Америка представителĕсене мĕншĕн килĕшменни çакăнтан паллă ĕнтĕ.

Совет делегацийĕн тепĕр сĕнĕвĕ çакăн пек: пилĕк аслă державăн—Хăрушсăрлăх Совечĕн яланхи членĕсен (СССР, США, Великобритани, Франци тата Китай)—çулталăк хушшинче хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсене виçĕ пайĕнчен пĕр пайне чакармалла; Генеральнăй Ассамблейăн мĕнпур государствăсен хĕçпăшалĕсене чакарассине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кĕске вăхăт хушшинче пĕтĕм тĕнчери конференци пухасси çинчен Хăрушсăрлăх Советне сĕнӳ памалла. Ун вырăнне США представителĕсем «хĕçпăшалсене пӳлсе тăрасси тата хĕçпăшалсене виçеллĕ чакарса пырасси» çинчен тунă проекта йышăнтарма хăтланаççĕ. Ку проектăн тĕллевĕ, тĕрĕссипе илсен, çакăн пек: хĕçпăшалсене пӳлсе тăрасси Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Çурçĕр Атлантика блокĕнчи çĕршывсене пуринчен те сахалтарах тивмелле.

Совет делегацийĕ ют çĕршывсен территорийĕсенчи çар базисене пĕтересси çинчен панă сĕнĕве хирĕç США делегачĕсем нимĕнле сĕнӳ те тăратайман. Унтан та ытларах, хăйсен сăмахĕсенче вĕсем çак ыйтуран пăрăннă. Ку вăл çакна пĕлтерет: Америкăри власра тăракан ушкăнсем çар базисем тăвассине «законлă» ĕç тесе шутлаççĕ.

Совет делегацийĕ çĕнĕ вăрçă пропагандине чарасси çинчен лартнă требовани пирки США представителĕсем яланхи пекех пăркаланма тытăннă. Вĕсем Америкăри хаçат-журналсем милитаризмла шухăш сарнине, çинчет ирĕклĕхĕ çине кăвантарнине стӳре кăларма [illegible]. [illegible] пулин, хăйсем хушшинче курайманлăх шухăшне сарас ĕçе Америкăри хаçат-журналсем кăна мар, США-н нумай официальнăй деятелĕсем те хутшăнаççĕ.

Совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене Политикăлла комитетра сӳтсе явни тĕнчери халăхсене тепĕр хут çакна уççăн кăтартса пачĕ: Совет Союзĕ яланах мирпе халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн кĕрешет пулсан, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вĕсем майлă тăракан государствăсем мире сыхласа хăварас задачăсемпе нихăш енчен те килĕшсе тăман политикăна малалла тытса пыраççĕ.

Анчах США-ри, Англири тата Францири власра тăракан ушкăнсем халĕхи вăхăтри чи кирлĕ ыйтăва—мирпе хăрушсăрлăх çинчен тăракан ыйтăва—пăхса тухассинчен пăрăнма пултараймаççĕ. Мĕнпур этемлĕх çав ыйтăва татса парассишĕн тăрать. Тĕнчери халăхсем мĕнпур тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса парас тата тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе ним тăхтаса тăмасăр мерăсем йышăнма требовани лартаççĕ.

## ФРАНЦИ ХАЛĂХĔ «ЕВРОПА ÇАРНЕ» ХИРĔÇ

Юлашки вăхăтра Францире «Европа çарне» тăвассине хирĕç пыракан кĕрешӳ вăйланнă. Франци халăхĕн анлă сийĕсем правительство умне çакнашкал требовани лартаççĕ: наци суверенитечĕпе хăрушсăрлăхне хăратса тăракан çак усал ĕçе тумалла мар.

Халăхăн çакăн пек требованийĕсем Наци пухăвĕн ĕçĕнче палăрнă. Наци пухăвĕнче правительствăн тулашри политикин ыйтăвĕсене сӳтсе явни çакна кăтартса панă: «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен тăракан ыйту тăрăх буржуалла партисем хушшинче пысăк хирĕçӳсем пур. Ку ыйту парламентăн сылтăм ушкăнĕсене «ыйтрашу» кăларать, «Европа çарĕ» майлă тăракансене хăйсем майлă пулакансене тупма питех те йывăр, тесе паллă тăвасçĕ Францири [illegible].

Наци пухăвĕн бюровне тĕрлĕрен резолюцисен проекчĕсем 20 тăратнă, вĕсенчен чылайăшĕ «Европа çарне» тăвас шухăша сивлеççĕ. Буржуалла партисенчен икĕ парти кăна—социалистсен партийĕ тата МРП («халăхăн республикăлла юхăмĕ») правительствăн «Европа политикине» майлă резолюцисем тăратнă. Социалистсен суйлавçăсен требованийĕсене шута илме тивет. Вĕсем хăйсен резолюцийĕсенче малтанах тĕрлĕ условисем çинчен каласа хунă. Сăмахран, çар блокне Англин хутшăнмалла, договора пăсас тăвас пулсан, хăй сăмахне тытасси çинчен США-н шантарса калмалла.

Коммунистсен партийĕн парламент ушкăнĕ Франци халăхĕ «Европа çарĕ» тĕлĕшпе мĕнле шухăш-кăмăлла тăнине пуринчен те уççăнрах палăртрĕ. Çак резолюцире депутатсем-коммунистсем правительствăран çак ĕçсене тума требовани лартаççĕ: «Бонра тата Парижра тунă договорсене хирĕç çĕршыв татăклăн тăнине шута илмелле. Вăл договорсем пуç пулса тăрас тата ют çĕршывсене туртса илес тĕллевпе Германие хĕçпăшаллантарма, çапла майпа пирĕн çĕршыва вăрçа кĕртсе ӳкерме палăртаççĕ; Франци халăхи прависене пĕтерме ирĕк памалла мар, çак правăсене хĕсме пултаракан нимĕнле обязательствăсем те илмелле мар; Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас тĕллевпе калаçу ирттерме пуçарулăх кăтартмалла. Германи ыйтăвне татса пани Германин мĕнпур кӳршисене вĕсен чиккисемшĕн лăпкăлăх туса хунине, Европăра хăрушсăрлăх тунине пĕлтерĕччĕ».

Франци халăхĕн ытларахăшĕ çакăн пек шухăш-ĕмĕтпе пурăнать те ĕнтĕ. «Европа çарĕ» майлă тăракансем çакна шута илесĕр тăма пултараймаççĕ. Çакна палăртмалла: социалистсен партийĕн руководителĕсем социалист-депутатсем хушшинче «пĕрлĕх» тăвассишĕн хытă тăрăшаççĕ. «Энформасьон» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çак парти лидерĕ Ги Молле «киленсе тăракансене», вĕсем «сасăламалли пĕрешке» пăхăнмасан тата «пĕрлешнĕ Европăн» проекчĕ майлă пулмасан, партирен кăларассипе хăратнă. Францири хаçатсем ытти буржуалла партисенче те çакăн пек йĕркесĕрлĕх пулнине палăртаççĕ.

Парламентра тавлашусем пынă вăхăтра правительство çакна ăнланнă: «Европа политикине» пĕр сăмахсăрах ырлакан ытларахăш пухма ăна йывăр. Лару-тăрăва çăлса хăварас тесе, МРП-ăн парламентри ушкăнĕ хăйĕн резолюцине тепĕр хут пăхса тухса çĕнетнĕ, унăн содержанине сылтăм социалистсен резолюцийĕн содержанийĕ патне сывхартнă. Анчах сылтăм социалистсем, малтан МРП-па пулăшма пулнăскерсем, каярахпа хăйсен резолюцийĕшĕн кăна сасăласси çинчен пĕлтернĕ. МРП лидерĕсен хăйсен позицийĕнчен пăрăнма, социалистсем майлă тăни çинчен пĕлтерме тивнĕ.

Социалистсем хăйсен резолюцийĕшĕн чи малтан сасăлаттарма требовани лартнине Наци пухăвĕ ытларахăшĕн сасăпа йышăнман. Кун хыççăн лару-тăру каллех йывăрланнă. Юлашкинчен вара Министрсен Совечĕн председателĕ Ланьель правительствăна шанса тăнипе-тăманни çинчен ыйту лартнă. Вăл çапла пĕлтернĕ: тĕнчери калаçусем пуçланнă самант тăрăх политика «уççăн паллă пулмалла».

Наци пухăвĕнчи халĕхи лару-тăру правительствăна килĕшмест. Кун пек лару-тăру Америкăри власра тăракан ушкăнсене кăмăлне каймасть. Вĕсем чылай вăхăт хушши ĕнтĕ Франци хĕсеççĕ, ăна Вашингтоншăн усăллă решени хăвăртрах йышăнма хистеççĕ.

Францире «Европа çарне» хирĕç пыракан кĕрешӳ Франци халăхне çĕнĕ авантюрăна кĕртсе ӳкерессн çинчен шухăшлама пăрахман çынсене хытăн асăрхаттарни пулать. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕн трибуни çинчен Жолио-Кюри академик мар çапла каланă: «Халĕхи вăхăтра Франци халăхĕ лару-тăрăва мир майлă çаврма пултарать. Çакна мĕнпур çĕршывсенче ăнланаççĕ... Вăйр пĕчĕк мар. Мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем Франци халăхĕнчен вăл пысăк ĕç тăвасса кĕтеççĕ, ăна шанса курăнаççĕ».

Д. БОЧАРОВ.

# Кил хуçи хĕрарăмсен хулари пухăвĕ

[illegible]сенче КПСС Шупашкар хула [illegible] хула Совет исполкомĕ килхуçи хĕр[illegible]арăмĕсен хулари пухăвне ирттернĕ. [illegible] 200 çын ытла пулчĕ.

[illegible] И. Буркова юлташ «Тĕнчери [illegible] тата халăхсем миршĕн кĕрешни» [illegible] доклад туса пачĕ.

Прение кил хуçи хĕрарăмсем Ложечникова, Чернова тата ытти юлташсем тухса каларĕç.

Пуху хыççăн музыка училищинче вĕренекен студентсем концерт пачĕç.

# Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ

ВЕНА, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн паянхи ирхи ларăвĕнче журналистсен пĕтĕм тĕнчери организацийĕн генеральнăй секретарĕ Ярослав Кноблох сăмах тухса калаć. Оратор çакна кăтартса панă: журналистсен пĕтĕм тĕнчери организацийĕ мире сыхласа хăварассишĕн тăракансене пур майсемпе те пулăшса пырĕ, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕн сассине миллионшар çынсем илтчĕр тесе, мĕн тума пултарнине йăлтах тăвĕ.

Тринидадпа Тобаго представителĕ Джон ла Розе сессие çапла пĕлтерчĕ: хĕçпăшалсене чакарасси, Германие мирлĕ майпа пĕрлештересси, Вьетнамри, Малайăри вăрçăсене чарса лартасси тата Америкăн ют çĕршыв территорийĕсем çинчи çар базисене пĕтерессине çинчен, пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тăвасси çинчен панă сĕнĕве Британи Гвианинчи тата Тринидадри 34 пин рабочи ырласçĕ.

Демократиллĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери Федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Жак Дени хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Жолио-Кюри тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатассишĕн пыракан кампание вăйлатасси çинчен панă сĕнĕве демократиллĕ çамрăксем пĕтĕмĕшпех ырласçĕ. Çĕр чăмăрĕ çинчи çамрăксенчен нумайăшĕ, тет Жак Дени, миршĕн тăраççĕ тата уншăн çине тăрса кĕрешеççĕ. Тăвата уйăх каярах пулса иртнĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери конгресĕ çакна кăтартса пачĕ: миршĕн пыракан кĕрешÿ çамрăксен тĕп интересĕсемпе килĕшсе тăрать. Конгресра тĕрлĕрен политикăлла шухăш-кăмăллă çамрăксемпе хĕрсем халăхсем тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатассишĕн кĕрешнине активлăн пулăшса пыма тупа тунă.

Ун хыççăн Жак Дени çамрăксем миршĕн кĕрешни çинчен тĕплĕн каласа панă.

Перси Белчер (Великобритани) хăйĕн сăмахĕнче Британи Гвианипе Кенире пулса иртнĕ ĕçсем çинче чарăнса тăнă. Вăл çапла каланă: Англи халăхĕ Англи влаçĕсен Кенири террористла ĕçĕсем майлă тăмасть. Çав тискер ĕçсене ытти халăхсен хăйсен управленийĕн тата ирĕклĕ пурнăçĕн прависене пĕтерес тесе тăваççĕ. Эпир, тенĕ вăл, пусмăрта пурăнакан мĕнпур халăхсен никама пăхăнманлăхĕшĕн тăмастпăр пулсан, пирĕн хамăрăн никама пăхăнманлăх çинчен требовани лартма нимĕнле право та çук.

Сессие студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕ ячĕпе Луис Аскарате саламланă.

Антуан Табет (Ливан) хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: хальхи вăхăтра Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчи лару-тăру агрессиллĕ вăйсем ку çĕршывсене вăрçă хатĕрленес ĕçе хутшăнтарма тăрăшнипе палăрса тăрать. Ку çĕршывсенче тинĕс-çар, сывлăш-çар базисем тăваççĕ. кивĕ базăсене аслăлатаççĕ. США Вăтам Хĕвелтухăçĕнче агрессиллĕ çар блокĕ тăвассишĕн хытă тăрăшать.

Никама пăхăнманлăхшăн пыракан кĕрешÿ тата тĕнчери ыйтусене мирлĕ майпа татса парассишĕн пыракан кĕрешÿ пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни пирĕн халăхсемшĕн ытларах та ытларах уççăн палăрать, тесе палла тунă Табет. Çак ыйтусене мирлĕ майпа татса пани тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма пулăшĕччĕ, империалистсен çар планĕсене пĕтерсе лартĕччĕ, араб çĕршывĕсенчи лару-тăрăва лайăхлатма пулăшĕччĕ.

Савăнпа та эпир Германипе Корея ыйтăвĕсене мирлĕ майпа татса парассишĕн тата Китай Халăх Республикине Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн ĕçне хутшăнтарассишĕн пыракан кĕрешÿ пирĕн наци интересĕсемпе килĕшсе тăрать, тесе шутлатпăр.

Итали представителĕ Реджис доктор хăйĕн сăмахĕнче хĕçпăшалсене, боеприпассене тата çар материалĕсене турттарса тăнине пĕтĕм тĕнчипех контроллесе тăма кирлине кăтартса панă.

Ун хыççăн Несмеянов академик (СССР) тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл пĕтĕм тĕнчери ученăйсем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлес ыйту çинче чарăнса тăнă.

Пĕтĕм тĕнчере наука тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлесси, тенĕ Несмеянов академик, кирлĕ пек пулса пырать теме çук-ха. Çыхăнса ĕçлесси XIX ĕмĕрхинчен питех те аякра. Пĕтĕм тĕнчере наука тĕлĕшпе çыхăнса ĕçлесси пĕтĕмĕшле чакрĕ. Вăл уйрăмах Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕ хушшинче хытă чакнă. Пĕр отрасль енĕпе ĕçлекен наука работникĕсем ĕлĕк пĕр-пĕринпе тĕл пулса паллашатчĕç. Халĕ çак ĕç те пĕтсе ларнăпа пĕрех. Наукăра тунă пит палла тĕпчев ĕçĕсене, вĕсем наукăшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă чухне те, пысăк концернсен наука организацийĕсем пытарса тăраççĕ.

Физика, механика, хими, биологи тĕлĕшпе тунă чылай ĕçсем çинчен пĕлтермеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем монополисене тÿрех е вăрçă кăларса пуйтарас тĕллевсемпе çыхăннă. Наука питĕ вăйлă аталанчĕ. Халĕ стратоплана уйăх çине яма, искусственнăй майпа çĕр спутникĕ тума реальнăй майсем пур. Чир-чĕрсенчен — этемлĕхĕн чи хăрушă тăшманĕсенчен — сывалмалли питĕ паха майсем тупнă, энергетика та вăйлăн аталаннă. Анчах та наука çитĕнĕвĕсемпе этемлĕхе хирĕç нумай усă кураççĕ, нумай ученăйсем тăрăшсах этемлĕхе хирĕç ĕçлеççĕ. Пĕр-пĕр çĕршывра наука тунă лайăх результатсем час-часах пурин пуянлăхĕ те пулса тăмаççĕ, çав результатсене вара нумай вăхăт хушши ĕçлесе тепĕр хут тăваççĕ. Наука пĕтĕм тĕнчере килĕштерсе ĕçленине кăтартакан тĕслĕхсем Пастер, Либих, Фарадей, Менделеев ĕçĕсем XIX-мĕш ĕмĕрте кăна пулман. Оксфордри ученăйсем пенициллин шухăшласа кăларнă, унпа пирĕн çĕршывра та усă кураççĕ, вăл пирĕн çĕршывра питĕ нумай çынсене вилĕмрен çăлчĕ. Савăн çинчен эпир чĕререн тав туса калама пултаратпăр. Кус курман çынна куракан тăвакан, Филатов тупнă меслетпе пирĕн çĕршывра кăна мар усă кураççĕ, ытти çĕршывсенчи нумай суккăр çынсем куракан пулнă. Эпир çавăншăн савăнатпăр. Эпĕ çапла шутлатăп: пирĕн çавăн пек усăллă наукăшăн, наука тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчере пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлессишĕн пыракан кĕрешĕве пур майсемпе те сарса ямалла.

Несмеянов академик совет ученăйĕсем тĕнчери ученăйсемпе çыхăнса ĕçлени çинчен тĕплĕн чарăнса тăрать.

Эпĕ çак аслă пухăва, тет малалла Несмеянов академик, шел пулин те халлĕхе пусра кăна шухăшлакан çавăн пек картина çинчен шухăшласа илме ыйтатăп: пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинче тĕп тăвас енĕпе ĕçлекен наука текех çук. Пĕтĕм тĕнчери ученăйсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе тата план, тăрăх хăйсен вăйĕсене наукăпа практикăри чи пысăк та çивĕч ыйтусене татса парас ĕçе хураççĕ, чир-чĕрсене пĕтермелли, пушхирсене тата Çурçĕрти усă курман çĕрсене парăнтармалли задачăсене хăвăрт татса параççĕ. Энергин çĕнĕ хăватлă çăлкуçĕсем çыншăн ĕçлеççĕ. Лайăх аталаннă автоматизаци çынна йывăр та хăрушă ĕçрен хăтарать. Çĕр айĕнчи ĕç пĕтет. Заводсем-автоматсем çын вăйне пĕтермесĕрех продукци туса кăлараççĕ. Çĕрĕçпе хими, вĕсемпе пĕлсе усă курнине пула, тĕнчери халăхсене кирлĕ продуктсем çителĕклĕ парса тăраççĕ. Мĕн ку—фантазиллĕ романăн страници-и? Çĕр чăмăрĕ çинчен пĕтĕмĕшле калас пулсан, çапла. Анчах совет науки çавăншăн çине тăрса ĕçлет. Ку вăл—СССР Наука академийĕн тата союзлă республикăсенчи 12 Наука академийĕн ĕç планĕн тĕп паллисем. Совет ученăйĕсем çак тĕллевпе ĕçлекен мĕнпур ученăйсемпе пĕрлешсе ĕçлеме хавас тата хатĕр.

Миршĕн пыракан юхăм унта нумай çынсем хутшăннипе вăйлă. Наука тĕлĕшпе çыхăнса ĕçленине тата наука ĕçне пĕрлештернине анлăн сарса ямалла. Наука ĕçне мĕнпур ученăйсемпе пĕрлешсе туса пыни миршĕн пыракан кĕрешÿре кирлĕ вăйсенчен пĕри пулса тăрать. Совет ученăйĕсем тĕнчере наука тĕлĕшпе çыхăнса ĕçлессине çавăн пек майпа та вăйлатасшăн: наукăлла литературăна пĕр-пĕрне усă курма май парассине пурнăçа кĕртмелле, наука тĕлĕшпе çыхăнса ĕçлессине организациллĕ майпа туса пымалла, ученăйсен пĕр-пĕрин патне тĕл пулса наука тĕлĕшпе çыхăнса ĕçлемелле, пĕр-пĕрин патне делегацисем ямалла, ученăйсен пĕчченшерĕн научнăй командировкăсене кайма ирĕк памалла, çамрăксене пĕр-пĕрин патне вĕренме ямалла, наука енĕпе пур тĕрлĕ майпа та çыхăнса ĕçлемелле. Çавăн пек тăрăшса ĕçлени миршĕн пысăк ĕç пулнине эпир шанса тăратпăр.

* * *

Ноябрĕн 27-мĕшĕнчи ирхи ларура çавăн пекех Парагвай делегачĕ Флорес композитор, Триест представителĕ Клаудио Тонель, Эриберто Хара (Мексика), Ирак представителĕ Абдулла Сатар. Профсоюзсен Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн представителĕ Казалеи, Яков Мажус (Израиль) тата Франци Суданĕн представителĕ Бираме Траоре, сесси ĕçне хăва пулса хутшăнакансккер, тухса каланă.

ВЕНА, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 27-мĕшĕнчи каçхи ларура чи малтан Сарраф (Ливан) тухса каланă. Вăл Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕн çĕршывсен шалти ĕçĕсене ют çĕршывсем хутшăннине хирĕç, хальхи вăхăтри вăрçăсемпе çар пропагандине хирĕç, ют çĕршывсен территорийĕсем çинчи çар базисене пĕтерессишĕн, атомлă тата водородлă бомбăсене, çавăн пекех бактериллĕ хĕçпăшалсене чарассишĕн, çак хĕçпăшалпа усă куракансене пурне те вăрçă преступникĕ тесе шутласси çинчен пĕлтерессишĕн, мĕнпур тавлашуллă ыйтусене халăхсен миршĕн тăракан шухăш-кăмăлĕпе килĕштерсе татса парассишĕн тăмалла, тесе сĕнÿ панă.

Вăл çавăн пекех аслă державăсене тĕнчери татса паман ыйтусене килĕшÿсем тунипе татса пама чĕнсе калама сĕннĕ.

Ун хыççăн Сири представительне Аль Гафарие сăмах параççĕ. Америка, Англи тата Франци империалисчĕсем, тет вăл, араб çĕршывĕсемпе хăйсен агрессиллĕ планĕсене пурнăçланă çĕрте усă курасшăн. Америка генералĕсемпе адмиралĕсем час-часах Сирие пырса каяççĕ. Нумаях пулмасть пирĕн çĕршыва Америка эскадри пырса кайрĕ. Пырса кайнă çынсен тĕллевĕ Сирие тата ытти çĕршывсене хĕсесси, вĕсене США-па çар килĕшĕвĕсем тутарасси пулать. Кун пек килĕшÿсем Пĕрлешуллĕ Штатсене араб çĕршывĕсене оккупацилеме тата вĕсен территорийĕнче çар базисем тума май парĕччĕç. Анчах араб çĕршывĕсенчи халăхсем миршĕн тăраççĕ. Вĕсем тавлашуллă ыйтусене мирлĕ калаçусем ирттернипе татса пама требовани лартаççĕ. Эпир, тенĕ Аль Гафари, атомлă, водородлă тата халăха йышлăн пĕтермелли ытти йышши хĕçпăшалсене чарасси çинчен лартнă требование ырлатпăр. Эпир аслă Китай халăхне ООН ĕçне хутшăнтарма требовани лартатпăр.

Британи Гвиани халăхĕн представителĕ Рам Карран Англи влаçĕсем тискер ĕçсем тунине питлене, Британи Гвиани правительстви арестленĕ членĕсене ирĕке кăларма, Британи Гвианинче демократиллĕ ирĕклĕхсене тепĕр хут тума требовани лартма чĕнсе каланă.

Бразили представителĕ Буксбаум США енчен Латинла Америкăри çĕршывсен ĕçне политикăпа экономика тĕлĕшĕнчен хутшăнасси вăйланнине кăтартса панă. Вăл: США Латинла Америкăри çĕршывсен нацин никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне долларсем пулăшнипе нихçан та сутăн илеймĕ, тесе каласан, сессире пулнисем тăвăллăн алă çупнă.

Пуэрто-Рико представителĕ Эрнандес Валье çапла каланă: Пуэрто-Рико Пĕрлешуллĕ Штатсем оккупациленĕ çĕршыв пулса тăрать. Ана тĕнчери правăна пăхса тăмасăр оккупациленĕ. Çав çĕршывăн халăхĕ йывăр условисенче Америка захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешет. 1950-çулта, халăх хĕçпăшалпа хирĕç тăнине пулатарнă хыççăн, икĕ пин çынна ябăн тĕрмене хупнă. Вĕсенчен нумайăшне ĕмĕрлĕхех тĕрмере хупса усрама приговор йышăннă.

Эрнандес Валье сесси участникĕсене Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнчен Пĕрлешуллĕ Штатсем Пуэрто-Рикăран хăйсен çар бази тунине тĕпчесе пĕлме ыйтма чĕннĕ. Пуэрто-Рикăн никама пăхăнманлăхне йышăнтарма требовани лартмалла, тенĕ вăл.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕн ноябрĕн 27-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче çавăн пекех Твал (Трансиорданн), Харди (юрист-демократсен пĕтĕм тĕнчери ассоцийĕ), Мишра профессор (Инди), Нимеллер пастор (Хĕвеланăç Германи) тухса каланă.

* * *

ВЕНА, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пьетро Ненни ертсе пынипе Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн юлашки ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларура Египет представителĕ Абдул Рахман Шаркави, Германин рейхсканцлерĕ пулнă Йозеф Вирт, Сахиб Синг Сокхей генерал-майор (Инди) тата Д'Астье де ла Вижери (Франци) тухса каланă.

Прениисем пĕтнĕ хыççăн, сесси комиссисем туса хатĕрленĕ резолюцисене сÿтсе явма тата çирĕплетме, Пĕтĕм тĕнчери мир Совечĕн çĕнĕ членĕсене тата Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюровĕн çĕнĕ членĕсене суйлама тытăннă.

Культура ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комисси председателĕ Эжени Коттон халăхсем хушшинчи культурăллă çыхăнусене çирĕплетме чĕнекен резолюци проектне вуласа панă. Сесси участникĕсем комисси сĕннĕ резолюцие пĕр кăмăллă пулса йышăнаççĕ.

Ун хыççăн, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюровĕ сĕннĕ тăрăх, 1954 çулта тĕнче культурин çавăн пек аслă представителĕсен юбилейĕсене: Англи писателĕ Филдинг вилĕренпе 200 çул тултарнине, А. П. Чехов вилĕренпе 50 çул тултарнине, чех композиторĕ Дворжак вилĕренпе 50 çул тултарнине, Аристофан çуралнăранпа 2.400 çул тултарнине уявласси çинчен решени йышăннă.

Трибуна çине Розенквист профессор (Норвеги) хăпарать. Вăл ученăйсем — сесси участникĕсем пĕтĕм тĕнчери ученăйсене халăха йышлăн вĕлермелли хĕçпăшала чарассишĕн кĕрешме чĕнсе çырнине вуласа парать.

Сесси участникĕсем тĕнчери мир премийĕсем парас тĕлĕшпе ĕçлекен жюрин çĕнĕ членĕсен списокне пĕр кăмăллă пулса çирĕплетеççĕ. Вăл списока Жорж Амаду профессор сĕннĕ.

Малалла Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн генеральнăй секретарĕ Жан Лаффит Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн çĕнĕ членĕсене тата Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюровĕн çĕнĕ членĕсене суйлама сĕнÿ парать. Сĕннĕ кандидатурăсене сесси пĕр кăмăллă пулса çирĕплетет.

Сесси участникĕсем пысăк хавхаланупа тĕнчери халăхсене пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешме чĕнсе калакан «пĕтĕмĕшле резолюцие» тата «Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатассишĕн тăракан организацисемпе деятельсем патне янă послание» йышăнаççĕ.

Сесси участникĕсем умĕнче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн вице-президенчĕ Пьетро Ненни юлашки сăмах каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ. Сесси ĕçне 59 çĕршывран килнĕ 314 делегат хутшăннă. Тĕрлĕрен ыйтусене—Европăна, Азие. Çурçĕр тата Латинла Америкăна, Африкăпа Австралие тивекен ыйтусене пăхса тухнă. Çак ыйтусене сÿтсе явни пĕтĕмĕшле требовани—мир тăвасси çинчен лартнă требовани патне илсе çитернĕ. Хальхи вăхăтра, тенĕ Ненни, мĕнпур ĕç массăсен вăйĕпе ăнланулăхĕнчен, мире хÿтĕлемелли юхăма сарса янинчен килет. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ, хăйĕн умĕнчи пĕтĕм ответлăха туйса, тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тĕллевпе калаçусем ирттерессишĕн тăракан мĕнпур çынсен пĕтĕм тĕнчери тĕлпулăвне ирттересси çинчен решени йышăнчĕ. Ку вăл миршĕн тăракансен мĕнпур наци комитечĕсен çĕнĕ задачине палăртать. Кашни комитетра тума пултарнă результатсем миршĕн пыракан кĕрешÿре тунă çитĕнÿсене кăтартса пани пулĕç, вĕсем кĕрешÿ мĕнпе вĕçленессине вĕçĕмсĕр шанса тăракан çынсене темиçе уйăхран тĕл пулма май парĕç. Çав кĕрешÿ пирĕн юхăмăн кĕрешĕвĕ кăна мар, мирпе прогрессăн тăракан мĕнпур этемлĕхĕн кĕрешĕвĕ пулса тăрать.

Пьетро Ненни Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ хупăнни çинчен пĕлтерет. Сессире пулнисем пурте нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ.

## Албани Халăх Республикин посольствинче пулнă йышăну

Албани Халăх Республикин нацилле уявĕ ячĕпе—Албание фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларнăранпа тăхăр çул тултарнă ятпа—ноябрĕн 29-мĕшĕнче, Албани Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. Прифти йышăну ирттернĕ.

Йышăнура çаксем пулнă: СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов, РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. П. Тарасов, РСФСР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ А. М. Пузанов, СССР Министрĕсем П. К. Пономаренко, А. Н. Косыгин, А. Г. Зверев, С. М. Тихомиров, Б. П. Бещев, А. Ф. Третьяков, К. П. Горшенин, Г. М. Орлов, ВЦСПС Председателĕ Н. М. Шверник, СССР Генеральнăй Прокурорĕ Р. А. Руденко, Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденный, СССР Министрĕсен Заместителĕсем А. А. Громыко, С. А. Борисов, С. В. Кафтанов, Н. Н. Беспалов, ССР Союзĕн Албанири посолĕ К. Д. Левычкин, Мускав Совечĕн Председателĕ М. А. Яснов, Арми Генералĕсем Г. К. Маландин, К. С. Москаленко, Адмирал В. А. Андреев, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин, СССР Тулашри Суту-илĕ Министерствин, СССР Оборона Министерствин, СССР Культура Министерствин ответлă сотрудникĕсем, Совет Союзĕнчи тата ют çĕршывсенчи пичет представителĕсем.

Йышăнура çавăн пекех ют çĕршывсен посольствисемпе миссийĕсен пуçлăхĕсем тата членĕсем пулнă.

Йышăну туслăн иртнĕ. (ТАСС).

## Албание ирĕке кăларнăранпа тăхăр çул тултарнă

### Тирана хулинчи чаплă пуху

ТИРАНА, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Тиранăри халăх театрĕнче столицăри общественносĕн чаплă пухăвĕ пулса иртнĕ. Ăна Албание ирĕке кăларнăранпа тăхăр çул тултарнă ятпа ирттернĕ.

Пухăва Мехмет Шеху уçнă. Албание ирĕке кăларнăранпа тăхăр çул тултарни çинчен Хюсни Капо доклад туса панă.

Савăнăçлă пухура пулнисем Албанири ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитетне, çавăн пекех КПСС Центральнăй Комитетне саламлă телеграммăсем янă.

## Болгарире Ф. Энгельс произведенийĕсене пичетлесе кăлараççĕ

СОФИЯ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, София хулинчи библиографи институчĕ панă сведенисем тăрăх, Болгарире Ф. Энгельсăн 21 тĕрлĕ произведенине 450 пин экземпляр ытла пичетлесе кăларнă.

Ф. Энгельсăн хăшпĕр произведенийĕсене темиçе хут пичетлесе кăларнă. Çапла, Энгельсăн «Происхождение семьи, частной собственности и государства» ятлă ĕçне тăватă хутчен 65 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. «Анти-Дюринг» икĕ хут пичетленсе тухнă. Унăн тиражĕ—50 пин экземпляр.

## Болгарири культура строительстви

СОФИЯ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири Коммунистсен партийĕпе халăх правительстви культура строительстви çине тимлĕн пăхаççĕ. Культура ĕçне аталантарма укçа-тенкĕ нумай уйăраççĕ. 1953 çулта, сăмахран, çак ĕçсем валли, 1939 çулхипе танлаштарсан, 120 хут ытларах укçа-тенкĕ уйăрнă. Халăх влаçĕн çулĕсенче çĕршыври хуласемпе ялсенче çĕнĕрен 634 шкул туса лартнă. Вĕсенчен 116 шкула 1952 çулта тунă. Хальхи вăхăтра Болгарире 8.515 шкул шутланать. Вĕсенче 1.700 пин çын вĕренет. Аслă шкулсем 14 уçнă.

1939 çулта çĕршывра 126 кинотеатр пулнă. Халĕ 1.173 кинотеатр шутланать. Театрсен шучĕ те ÿснĕ. 1944 çулта Болгарире 20 театр пулнă пулсан, халĕ 35 театр шутланать.

### ЧЕХОСЛОВАКИПЕ БРАЗИЛИ ХУШШИНЧИ СУТУ-ИЛӲ САРĂЛСА ПЫРАТЬ

ПРАГА, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Чехословакипе Бразили хушшинчи суту-илÿ çинчен тунă килĕшĕве 1954 çулти майăн 17-мĕшĕччен тăснă. Ку килĕшÿ пĕр-пĕрне таварсем парса тăрассине чылай ÿстерме палăртать. Чехословаки Бразилирен тирсăран промышленноçĕ валли кирлĕ чĕр-тавар, какао, кофе, тимĕр рудипе тата ытти таварсем илсе тăрать. Ун вырăнне вăл Бразилие машинăсем, хĕмла тата ытти таварсем те парать.

## Гаага хулинчи ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ хупăнна

ПАРИЖ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвеланăç Европăри ултă çĕршывăн (Франци, Хĕвеланăç Германи, Итали, Бельги, Голланди тата Люксембург) ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Гаага хулинчи канашлăвĕ паян хупăннă. Конференцире экспертсен Римри канашлăвĕн ĕçĕсем çинчен доклад итленĕ. Вăл канашлура «политикăлла пĕрлешĕвĕн» проектне сÿтсе явнă. Вăл пĕрлешÿ «Пĕчĕк Европа» ятлă. Паллă ĕнтĕ, Римри канашлу, тĕппипе илсен, икĕмĕш вырăнта тăракан ыйтусене сÿтсе явнă, чи кирлĕ ыйтусене, «пĕрлештерессине» планĕсемпе çыхăннăскерсене Гаага хулинчи канашлура пăхса тухма хăварнă.

Анчах Гаага хулинчи канашлу та экспертсен хăшпĕр сĕнĕвĕсене çирĕплетнипех çырлахнă. Тавлашуллă ыйтусене— халĕ тăвакан пĕрлешĕве хутшăнакан çĕршывсем хушшинче пысăк хирĕçÿсем кăларакан ыйтусене татса паман. Çак ыйтусене çĕнĕрен тăвакан яланхи комитет татса памалла. Комитет Париж хулинче ĕçлемелле. Çавăн пекех 1954 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче тепĕр хут канашлу пухма йышăннă.

### КИТАЙРИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ПРОИЗВОДСТВО ПЛАНĔСЕНЕ ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРАÇÇĔ

ШАНХАЙ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Синьхуажибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайри заводсем, фабрикăсемпе шахтăсем октябрь уйăхĕнче каçалхи ытти уйăхсенчинчен лайăхрах ĕçленĕ. Çак районти 33 предприяти хăйсен уйăхри заданийĕсене ирттерсе тултарнă.

Хаçат çырнă тăрăх, промышленность хурçă, хурçă изделийĕсем, чугун, çĕр кăмрăкĕ, электроэнерги, тĕрлĕрен рудасем, пăхăр, тăхлан, хура тăхлан, электричество пралукĕсем, çĕр мамăк çипĕ, пир-авăр тата ытти продукци туса кăлармалли уйăхри плана чылай ирттерсе тултарнă.

## Чечжудо утравĕ çинчи тыткăнри çар çыннисен лагерĕнче американецсем тунă тискер ĕçсем

### Китай халăх добровольцĕ каласа пани

ПЕКИН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Тыткăнран таврăннă Китай халăх добровольцĕ Го Чжао-ле Кэсона пынă Китай халăх делегацийĕсен членĕсене каçалхи март уйăхĕнче Чечжудо утравĕ çинчи тыткăнри çар çыннисен лагерĕнче американецсем тискер ĕçсем туни çинчен тĕплĕн каласа панă.

Го Чжао-ле тата унăн юлташĕсем Китайăн тыткăнри виçĕ çыннине вĕлернине тата тыткăна лекнĕ çĕршер çынсене тискеррĕн асаплантарнине курнă. Çавăн пек асаплантарнине пула, тыткăнри çар çыннисенчен нумайăшĕ йывăр чирленĕ. Тыткăнри виçĕ çынна, Америкăн çар полици штабĕ хушнă тăрăх, Чан Кай-ши агенчĕсем вĕлернĕ. Ун çинчен çав çынсене вĕлерессине тата асаплантарассине ертсе пынă Лю Вэнь-цзе хăй каласа панă. Вăл Го Чжао-ле пурăннă секторти агентсен пуçлăхĕ пулнă.

Март уйăхĕнче кашни каçах тыткăнри çар çыннисене асаплантарас тата ыйтса пĕлес тĕллевпе бункшар çынна сектор штабне илсе пынă. Лагерьте ăста пăхнă унта ананнă çар çыннисене курма пулнă. Тыткăнри хăшпĕр çынсен кусĕсене çапса суранлатнă, теприсен пичĕсем шыçса кайнă тата çуркаланса пĕтнĕ тумтирĕсем çинче юн паллисем пулнă.

Вилнисем хушшинче тыткăна лекнĕ çар çынни Чжан Сюэ-вэнь пулнă. Ăна тăван çĕршыва таврăнасшăн пулнăшăн гоминдан агенчĕсем вĕлернĕ. Чжан Сюэ-вэне сектор начальникĕ патне чĕнсе тĕпчененĕ. Вăл нимĕн те каламан, вара ăна агентсем тискеррĕн хĕнесе вĕлернĕ. Чжан Сюэ-вэнь тăнран кайсан, ăна сивĕ шывпа сапнă, тăна кĕме пуçласан каллех хĕнеме тытăннă. Çапла вара ăна виличченех хĕненĕ.

Китайăн тыткăна лекнĕ тепĕр çар çыннине—Ван Шао-цина агентсем мартăн 22-мĕшĕнче вĕлернĕ. Вăл лагерьте япăх апат çитернĕшĕн кăмăлсăр пулнă. Тыткăна лекнĕ Чжу Чэн-луна та çавăн пекех тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

Китайăн тыткăна лекнĕ çар çыннине Се Цин-фана питĕ хăрушшăн асаплантарнă. Мартăн 17-мĕшĕнче вăл сектор начальникĕ, агентсен пуçлăхĕ Лю Вэнь-цзе панă ыйтусем çине ответлеме килĕшмен, вара Се Цин-фана çĕçĕпе чикнĕ. Кун хыççăн гоминдан агенчĕ Се Цин-фана бензинпа сапнă та çунтарса янă.

*Приморье крайĕнчен килнĕ çыру*

## Савăнăçлă пурăнатпăр

Эпир иртнĕ çул Киселевск хулинчи сăрт-ту промышленность шкулĕнчен вĕренсе тухрăмăр. Халĕ Артем хулинчи шахтăра ĕçлетпĕр. Кулленхи ĕç нормине 140—150-шар процент тултарса пыратпăр. Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпа ялĕнчен килнĕ А. Львов, Патреккел ялĕнчен килнĕ В. Скворцов, Тускел ачи А. Смирнов уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ.

Эпир пурăнакан çурт пысăк та илемлĕ. Кану вăхăтне ирттерме кунта лайăх условисем туса панă. Пушă вăхăтра кинокартинăсем час-часах куратпăр, Культура двореçĕнчи вулав залĕнче хаçатжурналсем вулатпăр. Шахтăра ĕçлекен çамрăксем пултарулăх кружокĕсен ĕçне хутшăнаççĕ.

Ĕç укçи пирĕн çителĕклĕ. Çи-пуç лайăх, аван пурăнатпăр.

Хамăр республикăри çамрăксене ФЗО шкулĕсене вĕренме кĕме чĕнетпĕр.

И. НИКИТИН.

Приморски край.

## „Юратнă хĕр" пьесăна сÿтсе яврĕç

Çак кунсенче Чăваш государство академи театрĕ Л. Родионов çырнă «Юратнă хĕр» пьесăна Чăваш АССР 30 çул тултарнă ятпа тăракан клубра лартса пачĕ. Спектакль курма халăх нумай пынă. Куракансем пьесăна ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Спектакль хыççăн театрăн главнăй режиссерĕ К. Иванов çĕнĕ спектакле лартма мĕнле хатĕрленни çинчен кĕскен каласа пачĕ. Унтан курма пынисем спектакль çинчен хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа пачĕç.

— Театр, рабочисен пурнăçне, вĕсен ĕçĕсемпе ĕмĕчĕсене кăтартса паракан пьеса лартса пани пире савăнтарать, — терĕ Павлов юлташ.

— Çĕнĕ постановкăра эпир лайăх характерлă, заводра хисеплĕ ватă рабочин Руссовăн, çамрăк рационализатор Анатолин, заводри комсорг Людăн тата ыттисен пархатарлă ĕçĕсемпе паллашрăмăр. Çав вăхăтрах завод кантурĕнче ĕçлекен ирсĕр çăмăлттай Саша тата мещанка аллине кĕрсе ÿкнĕ цех начальникĕ Данил Алексеич сăнарĕсене сцена çинче куртăмăр.

Куракансем лайăх енсемпе пĕрлех, çитменлĕхсене те палăртрĕç.

— Ватă рабочи коммунист Руссов рольне вăйлăрах тата хăюлăрах тумалла пулнă, икĕ актра та вăл Людăпа калаçма хатĕрленет, анчах калаçмасăрах иртсе каять. Юлашки картинăра вăл пачах тух... манни те кăмăллах мар... такаль куракансем.

— Антонина Сергеевна (ту...) Чăваш АССР тава тивĕç... Г. Ананьева вылять пĕрте... шывра ÿснĕ хĕрарăм пек мар... çĕр, пÿтĕр хĕрарăм пек ту... рĕ Илларионова юлташ.

Юлашкинчен пьеса авторĕ... нев куракансем панă сĕнÿсене... се пьесăна лайăхлатма пулчĕ.

Е. НИК...

## КЕСКЕН...

Ялхуçалăх литератури туяна... пÿри кĕнеке магазинĕ каçалхи ... ри тавар саврăнăш планне 125... тултарнă. Юлашки вăхăтра ... ялхуçалăх работникĕсем тата ко... нĕсем ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăр... кĕнекесем нумай туяннаççĕ. Хруще... тата Молотов ячĕпе тăракан ... çĕршер тенкĕлĕх кĕнеке илнĕ.

В. КРОН...

МТС-ри почта уйрăмĕ. Ĕнер... ра çак кунсенче телефон ком... вырнаçтарса лартаççĕ. Каçал кун... уйрăмĕ уçма йышăннă.

И. ПЕ...

*Атăл çинче*

Каçал кĕрхунне Атăл шывĕ Шу... тĕлĕнче сентябрĕн 3-мĕшĕнче ... пуçланă та октябрĕн 21-мĕшĕнче... 421 сантиметр хушăннă. Октябрĕ... шĕнчен пуçласа шыв чакнă. Ĕнер... 8 сехет тĕлне пурĕ 384 санти... талăкра 2 сантиметр чакнă.

Атăл çинче талкăшĕпех пăр, ху... Ĕнер ирхине 8 сехет тĕлне çи... 9,7 градус сивĕ пулнă.

## Пĕлтерни

Декабрĕн 1-мĕшĕнче, 20 сехет... хула комитечĕн библиотека çурт... литикăлла экономие вĕренекенсе... лекци пулать. Лекци теми: «Çĕ... умĕнхи обществăлла-экономикăлла... цисем».

Лектор—П. Л. Лебедев юлташ.

КПСС ХУЛА КОМ...

Редактор зам...

М. Н. Я...

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТР... декабрĕн 1-мĕшĕнче чăвашла ... «Юратнă хĕр».

ЧАСАХ!—чăвашла спектакль «А... лĕпе».

Вырăсла спектакль «Любов... свете».

Спектакль 19 сехет те 30 ми... ланать.

КИНО

«УДАРНИК»—декабрĕн 1-мĕш... «Нĕ... лире ÿкернĕ çĕнĕ фильм ... олимпиаин».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-20, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—6-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—6-61, совет строительстви пайĕ—6-61, çырусен пайĕ—7-02, издательство кантурĕ—6-23.

НТ 09556 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 9665 тираж